156
-36369

Зоя Нестерова

# ЮТ АРӐМА АН ЧУП ТУ



Кугеси - 1998 г.

Национальная библиотека ЧР
4-036369

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 40
КС(Чув)
Н 56

Зоя Нестерова

# ЮТ АРĂМА АН ЧУП ТУ

Калавсем

Кӳкеç — 1998 ç.

УДК 894
ББК 84 Чув. 7—5
Н-56

Ч-36369

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

**Зоя Нестерова.**

**ЮТ АРĂМА АН ЧУП ТУ.**

Калавсем

Сдано в набор 14. 01. 1998 г. Подписано к печати 28. 01. 1998 г. Формат 60х84/16. Бумага газетная. Гарнитура литературная. Печать высокая. Тираж 1000 экз. Заказ 05. Лиц. № 040807 от 10. 04. 97 г.

Кугесьская типография Государственного комитета
Чувашской Республики по печати,
пгт. Кугеси, ул. Шоссейная, 13

© Изд-во «Чувашия», 1998 г.

ISBN 5-8676-5-094-4

ПРОВЕРЕНО
20 10

# Утне çитмен туртине

Калав

Дмитрий Владимирович, вăтăралла çывхарнă маттур пӳсиллĕ арçын, машинăран тухрĕ те хаваслă кăмăлпа хваттерĕнне васкарĕ. Хаваслă пулма сăлтавĕ пур. Виçĕ кун командировкăра пулчĕ вăл. Пысăк ĕç йĕркелесе ямаллаччĕ унăн Хытă иккĕленеччĕ Митюк вăл ăнăçлăн каясса. Турра шĕкĕр, тăрăшни ахаль пулмарĕ. Халĕ вăрăм çулран кăштах канмалла та каллех ĕçе кӳлĕнмелле. Хырăм та выçрĕ — кăнтăрлахи апат вăхăчĕ. Виççĕмĕш хута чупсах хăпарчĕ Митюк. Кĕсйинчен уçă кăларса хваттер алăкне уçрĕ — арăмĕ телейлĕн йăлкăшса хирĕç чупса пырасса кĕтрĕ. Анчах хваттерте шăп.

— Аня! — чĕнчĕ вăл.

Хваттер каллех шарламарĕ. Дмтирий кухньăна кĕчĕ. Плита çинче каструльте яшка вĕрет, çатмара çĕр улми хуллен чăшлатса пиçет. «Таçта тухнă ĕнтĕ», — шухăшларĕ кил хуçи пиншакне пăтана çакса. Пушмакне хывма тăчĕ те, куç алăк патĕнче тăракан мăшăр туфли çине пырса тĕрĕнчĕ. Арçын пушмакĕ... Анчах унăн мар... Урăх, ют пушмак. Мĕне пĕлтерет ку?. Чунра темле канăççăр сивĕ суйăм йăшăлтатса илчĕ. Упăшка çывăрмалли пӳлĕм енне ыткăнчĕ, алăка яр! уçса ячĕ те... Турăçăм.. Ыталансах выртаççĕ! Хытă ывăннă пулас, ним туймасăр çывăраççĕ. Арçынĕ хĕрринче, намăссăр арăм ничĕпе ун кăкăрĕ çумне йăшшăннă. Кам шутланă.. Эй, хĕрарăм! Тĕрĕс калаççĕ ăна виçĕ пуслăх та шанма юрамасть тесе... Çапах упăшка ăсран тухса кăшкăрса ямарĕ, чышкисене чăмăртаса аскăнчăксем çине ывăтăнмарĕ, шăппе çыртрĕ те пӳлĕм алăкне хупрĕ. Анраса кайнăскер, вăл кĕске вăхăт пĕр вырăнта хытса тăчĕ. Мĕн тăвас?.. Ашра вара тытса чарайми çил-тăвăл çĕкленчĕ. Çурта чĕтретсе урайне вăйран çĕклесе çапнă телевизор кĕрслетрĕ, чăнкăр-чанкăр янкăртатрĕ çĕре персе аннă хаклă люстра. Çывăрмалли пӳлĕмрен

палламан арçын çăмламас пуçĕ курăнчĕ те çавăнтах çухалчĕ. Ун енне вăркăнтарнă çемçе пукан хаяррăн шартлатса алăка пырса виркĕнчĕ. Мĕн куç умне пулчĕ, мĕн алла лекрĕ —пĕтĕмпех аркатрĕ, ватрĕ Митюк. Унтан хăвăрт тумланчĕ те хваттерĕнчен сиксе тухрĕ. Пуçне аллисемпе пăчăртаса пĕр вăхăт хускалмасăр тăчĕ, вара сасартăках вăй пĕтнине туйса, пусма картлашкипе ерипен анма пуçларĕ. «Уйрăлатăп Тек шăрши те ан пултăр çав аскăнчăкăн ман хваттерте, — шуса иртрĕ пуçра хаяр шухăш. — Анчах халех мар. Унччен кăштах лăпланас пулать. Алла илмелле хама..»

Çывăхрах ура сасси илтсе пуçне çĕклерĕ те... куçне чарса пăрахса, шанках хытса тăчĕ. Мĕн ку? Тĕлĕк-и? Куçа курăнать и? — Ана хирĕç арăмĕ хăпарать...

— Таврăнтăн-и? — хĕвел пек йăлкăшрĕ хĕрарăмăн телейлĕ кулли.

— Мĕнле? Анăçлă пулчĕ-и кайни? Чиперех-и? Ывăнтăн пулĕ... Хăнасем çывăраççĕ-и-ха? Куртăн пулĕ. Çапла... Йăмăкпа упăшки кĕтмен çĕртен персе çитрĕç паян. Катя качча тухрăм тесе пĕлтерчĕ-çке... Эсĕ мĕн?.. Мĕн пулнă сана? Кĕпӳ çурăлнă... Пӳрнӳнтен юн сăрхăнать. Мĕн пулчĕ? Çапăçраним? Кампа?. Турăçăм! — тавçăрса илчĕ хĕрарăм çавăнтах. Икĕ аллипе пĕççисене шарт çапрĕ те çӳлелле вирхĕнчĕ.

Намăсланнă Дмитрий Владимирович çаплах тăна кĕреймесĕр чылайччен вырăнтан хускалаймасăр тăчĕ, унтах сасартăках йывăрланнă урисене ирĕксĕр çĕклесе арăмĕ хыççăн сулланчĕ.

# Ют арăма ан чуп ту

Калав.

Виçĕ пулăçă тутлă яшка çинĕ хыççăн пĕр вăхăт сӳнекен кăвайт çине чĕнмесĕр пăхса ларчĕç. «Ытала та чуп ту, кулса тăтăр туту. Юрату парнеле, юрату», — янăрать пĕчĕк приемникран хитре çепĕç юрă.

— Çеркей пичче, хăвăн пирвайхи юратăву çинчен каласа пар-ха. Хĕре пĕрремĕш хут миçере чуп тунă эсĕ? — ыйтрĕ вунпилĕк-вунултă çулсене çывхарнă икĕ ачаран пĕри пĕрле пулла килнĕ çӳллĕ пӳллĕ самăртарах арçынран.

— Хм... Миçере тетĕн, — кăмăллăн мăкăртатрĕ арçын кăштах вăтаннă ачасен куçĕсенчен тăрăхларах тĕллесе пăхса. — Эпĕ, ачамсем, чи малтан çамрăк хĕре мар, çын арăм-

не, икĕ ачаллă хĕрарăма чуп тунă. Каярах йывăр хуйхă-суйхă чуна çунтарнине пула тĕттĕм çĕрсенче çывăраймасăр асапланнă, вĕри куççулĕ те йайтах юхтарнă. Çапла, хытă силлесе хăварчĕ çав чуп туни ман чуна. Халиччен те паянхи пекех астăватăп, — арçын шăпланчĕ те васкамасăр пирус чĕртрĕ.

— Ну, эпир итлетпĕр, — чăтăмсăррăн сăмах хушрĕ Пĕр ачи.

— Ку, пушшех интереслĕ, — хавассăн хушса хучĕ тепри.

— Юрĕ... Питех пĕлес килет пулсан каласа парам... Пăтăрмахĕ вара çапла пуçланчĕ. Ун чух эпĕ, сирĕн çулхи ача, тăххăрмĕш класра вĕренеттĕм. Шкулта октябрь уявне спектакль лартма хатĕрленетпĕр. Эпĕ çитĕннĕ каччă рольне вылятăп. Пьеса тăрăх манăн юратса пăрахнă хĕре ыталаса хĕрӳллĕн чуп тумалла. Юлашки репетици ирттереттĕмĕр — пирĕн класс ертӳçи Тамара Петровна пырса кĕчĕ. Халĕ вăл пенсире. Лайăх учительчĕ. Анне е ырă аппа пекех пулнă вăл пирĕншĕн. Юрататтăмăр эпир ăна. Репетицие те ахаль мар, çитменлĕхсене асăрхаса пире, вылякансене, пулăшас шутпа пынă ĕнтĕ вăл... Акă эпĕ хамăн чиперккене ыталарăм та тутинчен чăпăрт тутарса илтĕм.

— Тăхтăр-ха, — чарчĕ çавăнтах Тамара Петровна пирĕн пата, сцена çине çăмăллăн чупса хăпарса. — Михайлов, — пăхрĕ вăл ман çине, — эсĕ начар вылятăн... Капла чуп туние кам ĕненет эсĕ хĕрӳллĕн юратнине. — Кĕтмен çĕртен вăл мана ыталаса илчĕ те... Ну, кăтартрĕ, тӳрлетрĕ ман йăнăша. Вăтанса кайнăскер, эпĕ çĕр тĕпне сикме хатĕрччĕ çав самантра. Çапах çав урока ĕмĕрлĕхех питĕ лайăх астуса юлтăм... Ĕнтĕ уяв каçĕ çитрĕ. Клубра спектакль пуçланчĕ. Эпĕ, халлĕхе чаршав хыçĕнче тăраканскер, паллах, хумханатăп. Пуринчен ытла Тамара Петровна вĕрентнĕ саманта тĕрĕс выляймасран шикленетĕп. Ах, куракансен умне тухиччен çав вырăна тепĕр пĕчĕк репетици ирттерме май пулсан... Анчах мĕнле?.. Çывăхрах шкул директор арăмĕ тăрать. Пăхрăм та уп çине, пуçра çиçĕм ялтлатса илчĕ тейĕн — калама çук телейлĕ шухăш пырса кĕчĕ. Икĕ ача амăшĕ пулсан та, чиперха вăл... Кун пек чух нумай шухăшласа тăма юраманнине те хăвăрт ăнланса илтĕм. Вăхăчĕ те пулман тăхтама... Мĕнле хăюлăх çитернине халĕ те ăнланмастăп. Шутсăр лайăх выляс килнĕ пулĕ çав. Пĕр сăмахпа, юратнă учитель вĕрентнине сая ямарăм... Репетицие ăнăçлах ирттертĕм. Хĕрарăм хĕрелсе кайрĕ, темиçе утăм каялла чакрĕ те ман çине пĕрре тĕлĕнсе, тепре çилленсе пăхса илчĕ.

— Эсӗ мӗн, ӑсран тухмарӑн пулӗ-ҫке? — терӗ ҫеҫ, вӗлт пӑрӑнчӗ те куҫран ҫухалчӗ.

Ҫакӑнпа ӗҫ вӗҫленчӗ пулӗ тесе шутланӑччӗ эпӗ, анчах вӑл тин пуҫланса ҫаврӑнма тытӑннӑ иккен. Кӗркуннехи каникул хыҫҫӑн, класс алӑкӗ урлӑ каҫрӑм кӑна, мана юлташсем ҫаврӑнса илчӗҫ.

— Сана шкултан кӑларса янӑ вӗт.,.

Эпӗ шартах сикрӗм. Шӑмшак тӑрӑх сивӗ чупса саланчӗ.

— Кам каларӗ?

— Вӑн коридорта директор приказӗ ҫакӑнса тӑрать.

Урасем сасартӑках вӑйсӑрланнине туйса, эпӗ коридора тухрӑм, класс ман хыҫҫӑн. Ҫапла, ҫакӑнса тӑрать приказ.

«...за аморальное поведение Михайлова Сергея, ученика девятого класса, исключить из школы...»

— За амӑральное поведение тени мӗне пӗлтерет вӑл? — ыйтрӗ тахӑшӗ ушкӑнран.

— Чыссӑр, йӗркесӗр тыткаланӑшӑн, — ӑнлантарчӗ ҫавӑнтах тепри.

— Итле-ха, Ҫеркей, мӗн тунӑ эсӗ шкултан кӑларса яма? Мӗншӗн вӑл сана? — шавларӗҫ, ыйтрӗҫ, тӗпчерӗҫ юлташсем ман ҫине е тӗлӗнерех, е шеллерех пӑхса.

Эпӗ нимӗн те каламарӑм. Йӗрсе ярас килнине пытарса, вӑрт ҫаврӑнтӑм та шкултан чупса тухрӑм. Мӗн тумалла ӗнтӗ манӑн? Ӑҫта кайса кӗмелле? Паллах, эпӗ нимӗнле чыссӑр ӗҫ те туман. Эпӗ ӑна лайӑхрах, ӗнентермеллерех выляс тесе ҫеҫ-ҫке. Анчах мӗнле каласа парӑн кун пирки директора? Каласан та ӑнланас ҫук вӑл. Ун чух демократи пулман ҫав. Асли калани — саккун. Ан чӗн, ан тавлаш. Атте те ахаль каҫармасть кун пеккишӗн. Хӑлха чикки лектеретех. Суллантӑм вара ҫывӑхри яла. Унта манӑн шанчӑклӑ тус пурӑнатчӗ. Куҫҫуле шӑла-шӑла пӗлтертӗм хам инкеке. Вӑл мана ӗненчӗ, ӑнланчӗ.

Ӗнтӗ эпӗ ирсерен сумка ҫакатӑп та ытти шкул ачисемпе пӗрле килтен тухатӑп, уроксем пӗтсен вӗсемпех каялла таврӑнатӑп... Ҫапла пилӗк кун иртрӗ. Улттӑмӗшӗнче пырса кӗтӗм пӳрте — пирӗн патра Тамара Петровна ларать. «Ну, терӗм хама хам, пӗтрӗм». Аттепе калаҫса лараҫҫӗ. Эпӗ хама йӗп ҫинчи пекех туятӑп. Класс ертӳҫи мӗншӗн килнине каламасть. Мана лайӑх вӗреннӗшӗн мухтать, шкулти ӗҫсем, йывӑрлӑхсем ҫинчен пуплешсе ларать. Анчах сцена ҫинче пулса иртни, эпӗ эрнене яхӑн шкула ҫӳремен пирки шӑпӑрт. Акӑ атте тарса тӗпелелле утрӗ.

— Директор улӑштарнӑ приказне. Выговор панӑ сана.— пӑшӑлтатса пӗлтерчӗ ҫавӑнтах Тамара Петровна. — Ыран пыма пултаратӑн.

Ман ӑшра хӗвел ҫуталчӗ тейӗн.

Ҫакӑн пирки вӗсен, директорпа вӗрентекенсен, хушшинче мӗнле калаҫу-тавлашу пулса иртнине эпӗ халӗ те пӗлместӗп. Паллах, Тамара Петровна хытах ҫине тӑнӑ ӗнтӗ... Вӑт ҫапла.. Ну вӑтам шкултан эпӗ чиперех вӗренсе тухрӑм. Аслӑ шкула кӗрсе, ӑна ӑнӑҫуллӑ пӗтертӗм... Унтанпа, паллах юратнӑ та, хӗрсемпе хӗрарӑмсене те пайтах чуп тунӑ. Анчах ҫавӑншӑн вӗсенчен пӗри те мана ҫиллениине астумастӑп.

# Ҫӗнӗ хурӑнташ

Калав.

Кӑҫал хӗрӗме качча патӑмӑр. Кӗрӳ, ҫар ҫынни, Аякри Тухӑҫра службӑра тӑрать. Ашшӗ-амӑшӗ кӳршӗ республикӑра пурӑнаҫҫӗ. Инҫех мар пирӗн хушӑ, анчах ҫывӑх та мар. Нумаях пулмасть ӗҫпе ман вӗсен енне каймалла пулчӗ. Ҫӗнӗ хурӑнташсем патне кӗрем-ха терӗм. Туй шӑв-шавӗнче тӗплӗн паллашма май килмерӗ. Малтан, паллах, телефонпа пуплешсе илтӗмӗр.

Кӑмӑллӑн кӗтсе илчӗҫ. Хӑта шкапран ҫуттине кӑларчӗ. Тӑхлач тап-таса илемлӗ ҫивитти сарнӑ сӗтел ҫине апат-ҫимӗҫ лартса тултарчӗ. Хӑй пӗрле ларма май килменшӗн шеллесе, дежурствӑна тухса кайрӗ.

Тӑван-хурӑнташ пирки тиркесе пуплешни аванах мар пулӗ те-ха... Ну, сӑмах-юмахӗ хамӑр хушӑра пултӑр ӗнтӗ... Ҫапах каласа памасӑр чун чӑтмасть... Ҫапла, юлтӑмӑр хӑтапа иксӗмӗр. Сӗтел тулли апат-ҫимӗҫ. Чуна илӗртекен ҫутӑ кӗленче те ларать. Ман хӑта ӑна чӗнмесӗр уҫрӗ, ҫаплах чӗнмесӗр черккесене тултарчӗ. Тӗл пулнӑ ятпа пӗр пӗрне саламласа пушатрӑмӑр вӗсене. Вара пуҫланчӗ...

Татти-сыпписӗр сӑмах тӑкакан ҫынна килӗштеретӗр-и эсир? Тата пӗр сӗтел хушшинче темиҫе сехет ларма тӳр килнӗ-и сирӗн ҫавнашкал этемпе? Шӑп ҫавӑн евӗрли пулчӗ манӑн ҫӗнӗ хурӑнташ. Малтан чиперехчӗ, анчах черкке ӗҫрӗ ҫеҫ, чӗлхи саланса кайрӗ. Аса илсен халӗ те шӑмшак тӑрӑх сивӗ сӑрӑлтатса каять. Эпӗ луччӑ кунӗпе вутӑ ҫуратӑп, ҫӗр чаватӑп... Мӗн ҫинчен калаҫать тетӗр-и? Тем ҫинчен те, анчах ним ҫинчен те мар. Супӑнь кӑпӑкӗ пек калӑпӑшӗ пысӑк, шал-

та нимĕн те çук. Тĕрĕсне каласан, эпĕ ăна тăнламан, тăна илме те май çук унашкал пушă сăмах купине. Ячĕшĕн «аха», «çапла» текелесе лартăм ĕнтĕ. Хăвăрах шухăшлăр — мĕн тума кирлĕ мана унăн таçти ялта пурăнакан куккăшĕн кĕрӳшĕ чаплă пӳрт лартни, кӳрши ют арăм патне чупни, темле машина таптанă такам хурĕ çул çинче вилсе выртни çинчен пĕлме? Вăт çавăн пек тăршшипех ла-ла-ла та ла-ла-ла. Сыпсан эпĕ хам та чĕлхепе ĕçлеме хирĕç мар-ха. Анчах сăмах хушма та памасть. Калаçăва хутшăнма тăратăп кăна—«тăхта-ха, ан пӳл. Каласа пĕтерме пар»; — тесе хурать çеç. Эрехне çителĕклĕ ярса парса хăналасчĕ хуть. Çук, нумай ĕçмест, мана та хăйĕнчен иртме памасть. Кăмăллă сынпа калаçса ларнинчен ырри нимĕн те çук иккен уншăн. Уншăн ырă, маншăн асап. Тăван-пĕтен сĕтелĕ хушшинче типĕ карланкăна çăтса лар-ха. Тата пушă параппанĕ чарăнма пĕлмесĕр пакăлтатать. Эх, пĕлнĕ пулсан... Ăçта килсе лекрĕм?.. Ну, пăхатăп сехет çине — и-и, çывăрма вăхăт.

— Халех-и? — килĕшмерĕ хуçа. — Каласа пĕтермен-ха эпĕ. Лар-ха, лар. Итле малалла...

— Манăн ыйхă килет, — çинех тăтăм эпĕ. — Кăтарт, ăçта йăванса кайма юрать?

— Юрĕ эппин, — ирĕксĕррĕн çĕкленчĕ хурăнташăм сĕтел хушшинчен. — Арăм сана валли çак пӳлĕме сартăм терĕ. Атя кăтартам... А мĕн? Кĕçĕр эпĕ те кунта диван çинче çĕр каçма пултаратăп. Калаçса выртатпăр.

Эй, турăçăм!.. Вăт çакланчĕ хурăнташ... Ирхине вăранса куçа уçрăм — тул çутăлнă. Кухньăра мăкăр-мăкăр калаçни илтĕнет. Апла тăхлач тавăрăннă — ирхи апат хатĕрлеççĕ. «Ну, — шухăшлатăп, — çиес те хăвăртрах тухса шăвăнас кунтан»...

Хăта тепĕр кĕленче уçрĕ. «Мухмăр чĕртмелле пĕрер черкке ярар-ха», терĕ. Чĕлхи вара калех сӳтĕлсе кайрĕ. Киле каяс пирки асăнтăм çеç—и-и, ăçта унта—яхăнне те ямасть—калаçса ларар та калаçса ларар. Юрать-ха, тăхлач хута кĕчĕ. Тавах ăна уншăн.

Сĕтел хушшинчен васкаса тухрăм, тавтуса, сывпуллашса алăк патнелле утрăм. Автобус станцине ăсатса яратăп терĕ. Мĕн тăвăн? Тӳсес пулать. Турра шĕкĕр, нумай юлмарĕ. Çур сехет... пĕр сехет. Вара ирĕк. Телее, автобус нумай кĕттермерĕ.

— Шел, каласа пĕтерейменрĕм, — пăшăрханullăн хураварĕ хурăнташăм алă парса. — Тавтапуç килнĕшĕн. Шутсăр

савăнтартăн. Шутсăр килĕштертĕм сана. Маттур эсĕ, итлеме пĕлетĕн. Малашне час-часрах тĕлпуласчĕ. Тăхлачпа та курса калааçмалла.

Автобуса кĕрсе хам вырăна лартăм. Мотор кĕрлеме пуçларĕ, алăк шартлатса хупăнчĕ те, машина вырăнтан хускалчĕ.

Тул енче пӳрнисене выляткаласа тем ăнлантаракан хурăнташăм куçран çухалчĕ. Çемçе пукан çине тайăнса, эпĕ çăмăллăн сывласа ятăм та куçа канлĕн хупрăм. Тинех!

Тăван хулана чиперех çитрĕм. Акă пирĕн урам, акă эпĕ пурăнакан çурт. Кĕçех хваттере кĕретĕп. Унта шăп. Канлĕ шăплăх. Мĕн тери лайăх вăл- Çакнашкал шухăшсемпе хавхаланса пиллĕкмĕш хута васкамасăр хăпартăм. Пăхрăм та — тĕлĕннипе, хăранипе кăшт çеç йăванса каяттăм. Ман умра... хайхи хăта кулкаласа тăрать...

— Мĕн... мĕнле... Мĕнле майпа?.,—тутана аран-аран хускатса ыйтма пултартăм эпĕ.

— Эпĕ таксипе... Ыран канмалли кун та, — пырса тӳнлеттерчĕ пуçран.

Манăн лăпланса çитеймен нервăсем ашкăнма пуçларĕç. «Каллех пуçланать... Каллех çав вĕçĕмсĕр пушă лĕр-лĕре тăнласа ларма тивет. Паян та, ыран та...» — хăраса шухăшларăм эпĕ. Ашра çилĕ çавăрăнать. Мĕн тăвас? Хамăн тухса тарас-и? Ăна картлашкаран сирпĕнтерсе антарса ярас-и? Çав самантрах тĕксĕм сивĕ çанталăка ялтăр хĕвел пайăрки çутатса янă пек, пуçăма телейлĕ шухăш пырса кĕчĕ. «Çăкăр-тăвар хире хирĕç», — систерчĕ мана ăшри сасă... Чăнах та. Аслă сăмх. Вăл мана мĕнле хăналарĕ, манăн та çавнашкалах тараватлă хуçа пулмалла. Анчах мĕнле майпа? Пустуй сăмаха вĕçĕмсĕр пакăлтатас енчен, хăта манран вунă хут та вăйлăрах. Ку енĕпе эпĕ ăна çĕнтереес çук. Урăх меслет шырас пулать...

Чи малтан, хăна илтесрен, кӳрше кайса эпĕ арăм патне еçе шăнкăравларăм.

— Вăр-вар киле таврăнма ан васка. Мĕншĕнне кайран каласа парăп, — терĕм çеç.

Ун пеккисене шутсăр лайăх ăнланать ман арăм, пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ. Ну эпĕ хăвăрт çырткаламалли хатĕрлерем, эрех кăлартăм. Пирвайхи чĕрккене пушатрăм та, телевизор ярса куçа экран çине тĕллерĕм. «Тăхта-ха, тăнлама пар», — тетĕп хăтана вăл сăмах хушсанах. Унтан çав майпах магнитофон ленти çине çырнă юрă хыççăн юрă, унтан

тĕрлĕ юмах-халап итлеттертĕм çакна, пĕр вăхăт телефонпа пакăлтатрăм. Тем тума та хатĕрччĕ эпĕ çав вăхăтра — юрлама, ташлама, кутăн тăма та... Телее, ун пек хăтланма черет çитмерĕ. Пăхатăп — ман хăта куçне пĕр вырăна тĕлленĕ те чĕнмест. Кĕске вăхăт çапла ларчĕ те тăрса алăк патнелле утрĕ. Ăнлантăм эпĕ ăна — чĕре те савăнса, те хăнана шеллесе кăлт! турĕ.

— Ăçта эсĕ? — ыйтатăп хайхинчен.

— Кайса килмелли пур-ха, — тет.

— Каялла килетĕн пуль?

Чĕнмест. Тумланчĕ те ӳкĕтленине пăхмасăрах тухса кайрĕ. «Калаçса ларар-ха» тенĕ пулсан, юлатчĕ ĕнтĕ. Анчах манăн чĕлхе çавăрăнмарĕ... Çавăнтанпа васкамасть çĕнĕ хурăнташăм манпа тĕлпулма. Килме мар, шăнкăравламасть те. Эпĕ те васкамастăп çыхăнăва çĕнетме. Тем тумалла ĕнтĕ. Ют çын мар-çке, пĕртен пĕр хĕрĕмĕн çывăх тăванĕ. Çапах çын кăмăлĕшĕн ху кăмăлсăр пулнă тени те шутсăр тĕрĕс...

# Сӳтĕк

Калав

Симĕс çаран урлă унталла-кунталла пăрăнакан сукмакпа çамрăк хĕр утать. Ашă çил унăн хулпуççи урлă явăнакан кăпăшка çӳçĕпе вылять, чечен питне сĕртĕнсе ачашлать.

— Таçталла васкать ĕнтĕ чипер пике? — илтрĕ вăл хыçрах.

Çавăрăнса пăхрĕ — йăрăс пӳллĕ каччă пырать. Чăвашла сăмах хушман пулсан, кунти çын темĕн: çӳхе шĕвĕр питлĕ, çинçе сăмсаллă, хура кăтра çӳçлĕ.

— Автобус чарăннă çĕре çитмелле-ха, — кĕскен хуравларĕ хĕр.

— И-и. Апла пĕрлех каятпăр.

Юнашар утнă май палламан каччă хĕр çине ăшшăн-ăшшăн тинкерсе пăхрĕ.

— Хăш ялтан эсĕ, чипер пике? Мĕншĕн курман эпĕ сана халиччен?

— Кунти çын мар эпĕ. Аппа патне хăнана килтĕм.

— Халĕ хулана каятăн-и?

— Аха.

— Эпĕ те çавăнталла чуптаратăп-ха... Ыран ирех ĕçе васкамалла. Эсĕ тата, ĕçлетĕн-и, вĕренетĕн-и унта?

— Вĕренетĕп. Университетра...
— Хавас... Шутсăр хавас.
— Мĕншĕн хавас?
— Ну... тĕлпулнăшăн хавас. Пĕрле, юнашар утма тӳр килнĕшĕн хавас. Сан çине пăхса пыма хавас... Тата пĕр хулара пурăннине пĕлме шутсăр хавас... Пуриншĕн те хавас. Çанталăкĕ мĕнле лайăх паян. Мĕн тери илем таврара. Кăнкăвак пĕлĕт, çутă хĕвел, ура айĕнче сип-симĕс курăк, хитре чечексем... Чĕре юрлать ман халĕ! Ĕмĕрлĕхех тăсăттăм çак саманта.

Каччă ассăн сывласа ячĕ, тем калас пек хĕре куçран тинкерсе пăхрĕ, ăнсăртран тенĕ пек вĕри аллипе ун аллине перĕнчĕ.

Вĕсем аслă çул çине тухса ун хĕррипе утрĕç.

— Мĕнле чĕнмелле-ши сана, чипер пике?
— Анна теççĕ.
— Анна... Лайăх ят. Ан-на... Уçă, янравлă ... Ăçта, общежитинче пурăнатăн-и?
— Çук... Тăвансем патĕнче.
— Адресна памăн-ши?

Сасартăк ачашшăн йăлкăшакан пит-куç улшăнчĕ. Каччă малалла туртăнчĕ, çумранах вăшлатса иртнĕ çăмăл машина çине хыпăнса пăхрĕ, кăшт çеç хыçран чупмарĕ, Ăна курчĕç пулас. Машина темиçе метрта чарăнчĕ, уçăлнă алăкра çăмламас пуç каялла çаврăнса пăхрĕ.

— Аркадий, эсĕ ăçта, хулана-и? Ну, лар хăвăртрах...

Хĕр çинчен манса, каччă малалла талпăнчĕ, кĕçех уçса янă алнкран шалалла чăмрĕ.

— Пуш параппан... Сӳтĕк, — кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ хĕр тӳрĕ çулпа вирхĕннĕ машина хыççăн пăхса юлса.

## Тивĕçлипех

Калав

Лидюк е Лидия Григорьевна, иртнĕ çул педагогика институтне пĕтернĕ çамрăк вĕрентекен, çуралса ӳснĕ тăван ялĕнчен икĕ çухрăмри шкулта ĕçлет, киле час-часах тĕттĕм пулсан тин таврăнать. Паян тата уроксем хыççăн педсовет пулчĕ.

— Кĕçĕр клубра вечер пулать. Хуларан артистсем килнĕ. Спектакль кăтартаççĕ, — пĕлтерчĕ ăна урамра хирĕç пулнă тантăшĕ Елиса. — Пымастăн-и?

— Малтан киле кӗрсе апат ҫием-ха, — терӗ Лидюк.

Спектакль пуҫлааниччен ӗлкӗрчӗ вӑл. Анчах клубра пуша вырӑн ҫук. Тахӑшӗ ӑна малалла иртме сӗнсе, сцена ҫывӑхне пукан лартса пачӗ.

Лайӑх спектакль. Кулмалли те пур унта, хурланмалли те. Артистсем те аста выляҫҫӗ. Хулара вӗреннӗ чух, укҫа сахал пулсан та, Лида театрсене ҫӳреме юрататчӗ. Ҫавӑнпа вылякансенчен хӑшне-пӗрне палларӗ вӑл. Авӑ Маргарита Ульянова. Халӗ вӑл усал амаҫури ролӗнче. Тӑлӑх хӗре юратса пӑрахнӑ йӑрӑс пӳллӗ чипер качча та курнӑ театр сцени ҫинче Лида.

Спектакль вӗҫленсе зал ҫутӑлсан, ташӑ пулать тесе пӗлтерчӗҫ. Тенкел-пукана стенасем ҫумнелле иле-иле лартса, уҫӑ вырӑн турӗҫ те, клуб ертӳҫи баяннне туртса ярса, вальс выляма тытӑнчӗ. Мӑшӑрсем ҫавӑрӑнма пуҫларӗҫ. Хайхи чипер каччӑ рольне вылянӑ артист Лида патне пырса сӑпайлӑн пуҫне тайрӗ те ташлама чӗнчӗ. Ҫывӑхран пӑхма сцена ҫинчи пек ытла ҫамрӑк курӑнмарӗ вӑл. Ҫирӗм пиллӗкрен иртнӗ пулас.

— Выляма тухсанах куртӑм сире. Эсир ҫывӑхрах лартӑр та, — кӗвӗ ҫемине унталла-кунталла куҫкаланӑ май сӑмах хускатса ячӗ чипер каччӑ.

Малтан кӗске паллашу — ҫак ялтанах-и? Аҫта ӗҫлетӗр? Мӗн ятлӑ? Шӳт, ҫӑмӑл калаҫу, хаваслӑ кулӑ. Чӗлхи япшар, кӑмӑллӑ, шӳт тунисем килӗшӳллӗ. Йӗри-тавра хӗрсем ҫук мар пулин те, чипер артист Лидӑпа кӑна ташларӗ. Хура куҫсем савӑккӑн йӑлкӑшрӗҫ, тем пӗлес пек, тем кӗтнӗн сӑнаса пӑхрӗҫ, астарчӗҫ, чӗнчӗҫ...

— Шӑпа пуррине ӗненетӗн-и эсӗ? — ыйтрӗ каччӑ, калаҫу юххине тӑруках урӑх еннелле пӑрса тата «эсиртен» «эсӗ» ҫине куҫса.

Лида ун ҫине тӗлӗнерех пӑхрӗ.

— Темле, — терӗ вӑл шухӑшлан. — Мӗншӗн ыйтрӑр?

— Эпӗ ӗненетӗп. Ҫавӑнпа каламасӑр чӑтаймастӑп. Паҫӑр сана куртӑм кӑна, чӗрем картах турӗ, «Акӑ ман шӑпа», шухӑшларӑм... Ҫук, ун пек мар, — тӳрлетрӗ хайне арҫын савӑнтах. — Темле сасӑ пӗлтернӗ пек туйӑнчӗ ӑна мана. Эсӗ мӗн шутлатӑн кун пирки?.. Чӗрӳ нимӗн те каламасть-и сана?

Хӗр чӗнмесӗр хулпуҫҫине хускатса илчӗ.

— Сан чуну та ман енне туртӑнать пулсан, эпир чӑннипех пӗрне пӗри пӳрнӗ ҫынсем. Ҫапла мар-и? — хӗрӳллӗн пӑшӑлтатрӗ арҫын. Куҫсем ҫулӑмланчӗҫ, вӗри али хӗр пилӗкне

хыттăн пăчăртарĕ. — Мĕн кĕтмелли?.. Çывăх çынсем пулар... Пурнăç çулĕпе алла алăн тытăнса пĕрле утар.

— Тĕплĕн шухăшламасăр халлĕхе нимĕн те калаймастăп, — тăхтарах хуравларĕ хĕр.

— Эх, Лидочка, çамрăк вăхăт иккĕ килмест. Вăл кĕске. Унпа савăнса юлма васкамалла...

— Чăвашсем васкакан арăмран савăнман, теççĕ...

Пилĕке хĕрӳллĕн ыталакан алă пушанчĕ, хĕмленекен куçсем тĕксĕмленчĕç. Çав самантрах баян та шăпланчĕ. Калаканĕ тăрса пуçне тайрĕ те вечер вĕçленни çинчен пĕлтерчĕ. Ташлакансем те, куракансем те кар çĕкленсе, тухмалли алăк енне сулăнчĕç. Чипер каччă малтан Лидăпа юнашарах утрĕ. Унтан, тем пулчĕ-çке, такама курнă пек сасартăках малалла ӳпĕнчĕ.

— Каçарăр, эпĕ сире ăсатса яма пултараймастăп. Манăн каймалла, — терĕ вăл, вара сывпуллашмасăрах хĕре хыçала хăварса, çынсем кĕпĕрленекен алăк енне ăнтăлчĕ.

«Кӳренчĕ, — шухăшларĕ Лида ун хыççăн салхуллăн пăхса юлса. — Астаракан тетте паман ача пекех, кăмăлсăрланса çавăрăнса утрĕ».

Пĕр-икĕ кунран урамра ăна каллех Елиса тĕл пулчĕ.

— Сана мĕн каччу пăрахса тарчĕ çак? — ыйтрĕ вăл тăрăхлакан куçне тантăшĕ çине тĕллесе.

— Мĕнле каччă? Ăçтан?.. А-а, артист-и? Васкамалла терĕ. Хыпаланса тухса кайрĕ.

— Ха-хе-хе... Мана ăсатма пычĕ вăл. Чăнах ара. Клубран тухрăм та утаттăм тĕттĕм урампа килелле. Сасартăк хыçрах арçын сасси. «Сирĕнпе юнашар утма юрать-и?» терĕ. Тӳрех, сассинченех палласа илтĕм. Хайхи çамрăк артист!

— Эсĕ, мĕн, пирĕн ял хĕрĕпе ташларăн-ташларăн та ăсатса та ямастăн? — тетĕп çакна.

— Хам та пĕлместĕп мĕнле пулса тухнине, — хуравларĕ вал. — Сана куртăм çеç, тĕнчере мĕн пуррине пĕтĕмпех манса кайрăм...

Лидюк Елиса çине пăхса илчĕ. Чăнах та, ялта чи чипер хĕр шутланнă вăл. Халĕ те хитре. Хуп-хура пысăк куçĕсем çалтăр пек илемлĕ, пичĕ килĕшӳллĕ, таса. Тата вечера сăрланса пынă ĕнтĕ...

— Эх, пуплешет вара! — тăсрĕ Елиса сăмахне. — Ĕмĕр çăвар карса итлесе ларăттăм, — хĕрарăм ассăн сывласа ячĕ.

— Мĕн калаçать-ха?

— Алăкран тухнă чух куртăм сана, — хавхалансах ка-

лама пуҫларӗ хӗрарӑм. — Пӑхса илтӗм кӑна, чӗре картах турӗ, тет.

— «Акӑ ман шӑпа» шухӑшларӑм эпӗ, — тантӑшне пӳлсех хушса хучӗ Лидюк.

— Аха, чӑннипех ҫапла каларӗ... Эсӗ ӑҫтан пӗлетӗн?

Хӗр кулса ячӗ.

— А-а, ӑнлантӑм... Ӑнлантӑм. Апла эппин, — Елиса сасси ҫӳрӗкленчӗ. — Эпӗ чӑннипех мана юратса пӑрахрӗ тесе. Шеллерӗм ӑна.

— Шеллерӗм? Мӗншӗн?

— Ман Юркка... Вечера пыма килӗшмерӗ хӑй... Мана хирҫӗ урама тухнӑ. Ну, эсӗ пӗлетӗн ӗнтӗ ун асар-писер кӗвӗҫне. Пырса тӑчӗ те, эпӗ ним калама та ӗлкӗреймерӗм, хӑлха чиккинчен пӗррех туянтарса ячӗ качча... Тивӗҫлипех лектернӗ эппин. Саншӑн та, маншӑн та... Хе хе-хе. Ну, эп кайрӑм. Чипер юл. Кӗрсе тух пирӗн пата иртсе ҫӳренӗ чух.

# Парне

Василий Анисимович пушмакне алла илчӗ те ассӑн сывласа ярса, пуҫне салхуллӑн сулкаларӗ. Тепӗр икӗ эрне тӳсӗши, тӳсме-ши... Тек юсасан та усси пулас ҫук. Пӗр саланма тытӑнсан, нимӗнле пӑта та, нимӗнле саплӑк та пулӑшмасть ҫав. Ҫара уран ҫӳремелле-и вара? Ҫӗнни илес — ой-ой-ой! Миҫе ҫӗр пин тӑрать халӗ вӑл. Пенси тӑранкаласа пурӑнма ҫитет-ха. Анчах пушмак туянас пулсан, мӗнле пурӑнмалла? Шӑл шаккаса ҫӳренипе хырӑм выҫҫи касармасть-ҫке.

Ҫакнашкал хавассӑр шухӑшсемпе пуҫне пӑтратса Василий Анисимович килӗнчен тухрӗ. Юлташӗ кӗтет-ха ӑна, каласмалли пур. Ҫул пӗр енӗпе ҫӳллӗ карта тӑсӑлать. Карта хыҫӗнче пӗрлешӳллӗ сад. Пыратчӗ утса Василий Анисимович, сасартӑк хӑй те сисмерӗ, чарӑнчӗ. Инҫе те мар пӗчӗк йытӑ ҫури... пушмакпа вылять. Шӑлӗсемпе ярса тытнӑ та е лӑстӑр-лӑстӑр силлет, е унталла-кунталла сулкаланать, е ҫурас пек малти урисемпе пусса туртать. Иртсе пыракан ҫын хӑй ҫине кусне тӗлленинне курсан, йытӑ ҫури пушмака пӑрахрӗ, хӑй вара тем калас пек ун ҫине пӑхса илчӗ. Унтан . икӗ хӑма хушшинчи пӗчӗк шӑтӑкран карта тешш енне кӗрсе ҫухалчӗ. Василий Анисимович пушмака илчӗ, ҫавӑркаласа пӑхрӗ. «Лайӑх, ҫирӗп ботинках... Хуҫи шырать пулӗ. Вӑт шельма», — куларах шухӑшларӗ вӑл. Вара карта ҫине ҫӳллӗ хӑма тӑррине тӑхӑнтаргса хӑварчӗ. Пӗр-икӗ сехетрен каялла

килнĕ чух пăхать — шăп паçăрхи вырăнтах çав йытă çури каллех пушмак муталать турткалать, силлет, лăрахать, каллех ярса тытать. Ку хутĕнче те чăтаймарĕ Василий Анисимович, чарăнчĕ. Пĕчĕк ашкăнчăк каллех пушмака шăлĕнчен вĕçертрĕ те пуçне çĕклесе çын çине пăхса илчĕ. «Кирлĕ-и сана? Пама пултаратăп. Ме», — тесшĕн пулчĕ-ши вăл, хăй чĕлхипе тем тĕхлетсе илсе, павăрăнчĕ те шăтăкран кĕрсе кайрĕ. Ай-уй! Çав пушмаках-çке ку!.. Мĕнле майпа?.. Василий Анисимович карта çине пăхрĕ... Лешĕ унтах çакăнса тăрать. Вăр-вар кармашса илчĕ, танлаштарса пăхрĕ. Тĕлĕнмелле... Ун аллинче халĕ пĕр мăшăр лайăх, çирĕп ботинка... Калăпăшĕ те унăн... Тăхăнса пăхмасăрах паллă. Тусанпа варланнă çеç. Тата, хуçи тем сăрланă пулас, темиçе çĕрте сăр тумламĕсем пур. Ну, кăна тасатма пулать. Икĕ-виçĕ çул упрарах тăхăнсан, тен, ытларах та тӳсĕ...

«Анчах юрамасть-çке капла, — пырса çапрĕ пуçа тепĕр шухăш. — Тем тесен те»... Эй, мĕн шухăшласа тăмалла вара? Вăрламан вĕт. Тата... тĕрĕсрех каласан, парне вăл. Йытă çури парнелерĕ ăна... Тен, пĕлнĕ вăл. Тен, çакăнтан иртессе чухласа, юри ун валли илсе тухнă. Çыраççĕ-çке, калаççĕ мĕн пуласса малтанах пурне те ăнкаракан тĕлĕнмелле çынсем пурри çинчен. Йытăсем хушшинче çук-и вара ун пеккисем? Паллах, пур. Мĕнле ăслă йытăсем пулаççĕ ĕшшĕ. Çакнашкал сисĕмлĕхпе вĕсем çынран та ирттереççĕ... Кам пĕлмест кун çинчен...

Василий Анисимович хаклă парнене хул хушши айне хĕстерчĕ, пиншакĕпе хупларĕ те, сасартăках шăмшак çăмăлланнине туйса, килнелле вашлаттарчĕ.

## Эх, мăшкăл!...

Аçтан туянса пулчĕ çак шуйттан выльăхне? Арăм сăмахне итлесс, хама валли хам асап тупрăм. Çулăхрĕ çилĕм пек: «Илер те илер». Такам калана ăна качака сĕчĕ уйрăмах сиплĕ тесе. Аленка хĕрĕм валли ĕнтĕ. Темшĕн иммертерех ӳсет-çке çав ача пирĕн.

Нуши вара çав эсреле картишне килсе янă кунах пуçланчĕ. Апат çисе крыльца çине тухрăм çеç, çӳлтен ме-ке-ке-ек! тени илтĕнчĕ. Пуçа çĕклерĕм те — сарай тăрринче чаклаттарса çӳрет. Çывăхра пушă урапа ларатчĕ, çавăн çинчен сикнĕ ĕнтĕ çӳлелле. Ну, спортсмен! Телевизорпа ют патшалăхсенче килти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхпе ăмăртусем иртерниие

кăтартаççĕ. Шел, пирĕн çук çав йĕрке. Çавнашкал конкурссем пулас пулсан-ц, сикессипе кăна мар, ытти нумай енĕпе те пирĕн Катюк пĕрремĕш вырăна тухмалла. Хăвăрах шухăшлăр — пирвайхи икĕ-виçĕ эрне килтен туха-туха тарса чуна хăшкăлтарчĕ. Карта-хура уншăн нимĕн те мар — вĕлт çеç сиксе каçать. Унтан урам алăкне уçма вĕренчĕ. Хам куçпа хам куртăм. Малтан шашулккине мăйракипе çаклатса çĕклет, унтан алăка сăмсипе хирме тытăнать. Ну, ку çеç пулсан тата та юрĕччĕ-ха. Картисене çӳллетме, алăкне Катюк уçмалла мар тума пулать... Эх, пĕлесчĕ сирĕн манăн хальхи пурнăçа... Юлашки вăхăтра хам киле хам, вăрă пек шиклене-шиклене, унăн-кунăн пăхкаласа çеç кĕретĕп вĕт. Шутлăр-ха, мĕн ĕç ăна качакана, хăш-пĕр чух эпĕ киле кăштах сыпса таврăннинче? Выльăхăн выльăх пек пулмалла пуль. Пăхаççĕ ăна, тăрантараççĕ. Çи те вырт. Çук, усал хунямa пекех, пырса тăрать те нăш-нăш сывлать, тытăнать вара пуçне çиллессĕн унталла-кунталла сулкалама. Эй, мĕн каласси пур. Ара, ырă выльăха кам сутать? Ну, ку та нимĕн те мар, тейĕпĕр. Хăтлантăрах.

Чăн-чăн нуши икĕ эрне каярах пуçланчĕ. Çав кун арăм Аленкăна çавăтрĕ те çĕр выртмаллах хунĕм ялне кайрĕ. Амăшĕ чирлет тет-и çав. Вăхăт нумай та иртмерĕ, Якур пырса кĕчĕ. Асаттесемпе çыхăннă таçти аякри хурăнташ вăл пирĕн.

— Улаха килтĕм. Паян ман Ванюшăн çуралнă кунĕ. Атя яратпăр, — терĕ те сĕтел çине çуттине шап кăларса лартрĕ. Ара, ача сывлăхĕшĕн ма ĕçес мар. Виçĕ ывăл Якурăн. Тĕрĕссипе каласан, вĕсен çуралнă кунĕсене ман хурăнташăм çулталăкра вуншар хут та паллă тăвать пулĕ. Çапла. Шутсăр юратать ачисене. Хытă чыслать... Ну, йĕркеллĕ ĕçсе, калаçса лартăмăр. Ӳсĕр мар. Çур литр икĕ вăйпитти арçына мĕн вăл... Кĕçех урамра выльăх-чĕрлĕх макăрни илтĕнчĕ. Кĕтӳ яла кĕчĕ. Тухрăмăр Якурпа. Картиш алăкне яри уçса, сурăхсене, ĕнене кĕртрĕм. Катюк кил еннелле васкамасăр утатчĕ, анчах пилĕк-ултă утăмра чарăнчĕ те сăмсине каçăртса мăш-мăш сывласа илчĕ.

— Ма кĕмест вăл? — ыйтрĕ Якур, качака вырăнтан хускалманнине курса.

— Пирĕнтен эрех шăрши кĕрет. Юратмасть вăл ăна, — ăнлантартăм эпĕ.

— Эсĕ ăна сыптар кăштах, — кулса ячĕ Якур. — Ман кушак умĕнче халь кĕленче уç-ха, тӳрех чупса пырать.

— Çук, юрамасть апла, — çирĕппĕн хирĕçлерĕм эпĕ. — Катюк сĕтне Алена ĕçет-çке.

Качакана картишне хуса кĕртнĕ çĕре ман юлташăм пÿрт-рен черкке йатса та тухнă.

— Акă, — тăсрĕ вăл ăна ман енне. — Темиçе тумлам çеç кунта. Уншăн нимĕн те пулмасть. Пар-ха, пар. Мĕн пулать, курар, — терĕ те Якур картиш варринче лăпкăн кавлесе та-ракан качакана мăйракаран пырса тытрĕ. Ну, кула-кулах черккине сăмси патне илсе пырса шăршлаттартăмăр, темиçе тумламне тутинчен сĕрсе ятăмăр. Эх, килĕшмерĕ- Тытăнчĕ Катюк тулхăрма, пуçне унталла-кунталла сулкалама.

Тĕттĕмлене пуçласан, ĕне сурăм, унтан савăт илсе кача-ка патнелле утрăм. Çывхартăм кăна — ак хайхи! — хирĕç вăрт çавăрăнчĕ, пуçне пĕкрĕ те, ан тĕкĕннĕ пултăр тенĕ пек, шĕвĕр мăйракине ман çине тĕллерĕ.

— Катюк! Катюк, — тетĕп çакна ачашшăн.

Çук, яхăнне те ямасть. Хатĕрленсе тăнă, кĕç-вĕç пырса панклаттарать.

— Эй, санпа!

Унăн-кунăн пăхрăм — карта çинче шĕлепке çакăнса тă-рать. Çулла ун пеккипе хула хĕрарăмĕсем пит-куçа хĕвелтен хупăрласа çÿреççĕ. Майра-кин, шăллăм арăмĕ, курма кил-сен, пăрахса хăварнă. Арăм тем тума тухса çакнă ăна, çунă пулĕ-ши. Илтĕм те çав шĕлепкене ывăтрăм Катюк пуçĕ çине. Шăп мăйракинчен çакланчĕ, питне лап хупласа хучĕ. Шĕлеп-келлĕ качака. Пăхрăм та ирĕксĕрех ахăлтатса кулса ятăм.

— Э-э лекрĕн-и, — тетĕп. — Тек юнаймăн мăйракупа.

Çыхса лартрăм мăйĕнчен юпа çумне. Тапăртатрĕ, темиçе хутчен мекеклетсе те илчĕ. Юлашкинчен, лăпланчĕ ман ка-чака, чиперех тăрать. Сăвас тесе кукленсе лартăм çеç, шарт тутарчĕ урипе. Чÿлмек пăлтăр-палтăр йăванса кайрĕ.

— Э-э, апла-и эс! Ну, кăтартам эпĕ сана!

Кантра илтĕм те урисене тăлласа лартрăм. Ĕнтĕ тапай-масть. Каллех качака çилли умне пĕшкĕнтĕм. Туртатăп-тур-татăп — пĕр тумлам сĕт тухинччĕ хуть. Çапла асапланнă вă-хăтра анне пырса кĕчĕ.

— Ай-уй! Ку мĕскер? Мĕне пĕлтерет ку? — тĕлĕннĕ пит-куçне сарлака шĕлепке тăхăннă Катюк çине тĕллерĕ вăл. — Кăпа кам капла?

—Вăт сутармасть, çапăçать, — пĕлтертĕм эпĕ, кăштах имĕннĕ пек пулса.

Эх, тытăнчĕ анне мана тăрлаттарма. Чунсăр çын иккен



Национальная библиотека Чувашской Республики
Ч-36369

эпĕ. Арăм кайнă-кайман ĕçсе супнă та айăпсăр выльăха асаплантаратăп-мĕн. Качакана мар, мана хама çапла алран-урараи çыхса лартмалла ,мĕншĕн тесен Катюк выльăх пулсан та, манран ăслăрах имĕш. Унтан вăл шпекене илсе вăркăнтарчĕ, тăлла вĕçертсе ячĕ, юпа çумне çыхнă вĕрене салтрĕ. Эпĕ мĕн пуласса шухăшласа илме те ĕлкĕреймерĕм, качака чупса пычĕ те тăрс тутарчĕ мана. Лач персе антăм. Çитменнине шăп ĕне каяшĕ çине. Сиксе тăрас тесе хускаттăм çеç, пилĕкрен тем яш чикрĕ. Çапах йăраланкаласа тăватă уран çĕклентĕм кăна, тепре хыçран çемçе вырăнтан пырса тăрслаттарчĕ. Вара çитет сана пĕреллĕхе тенĕ пек, пуçне каçăртрĕ те, çаврăнса утрĕ. Арçын пуçпа епле тӳсĕн çавнашкал мăшкăла! Эпĕ те чăтаймарăм. Ыратакан пилĕке хăрах алăпа тытса, ухсахла-ухсахла, пушă патне танкăлтатрăм.

— Ах, эсĕ... уни-куни!.. Курăк хырăмĕ! Нитрат нумай çисе, ăсу кутăн çаврăнса ларчĕ-им? Плин! Мать-мать...

Юрать анне пулчĕ. Унсăрăн, кам пĕлет, темпе вĕçленетчĕ-ха çав хаяр çапăçу.

Çав кун пăсăлчĕ пирĕн Катюкпа иксĕмĕр хушăра мирлĕ пурнăç. Шутлăр-ха эсир, черкке тĕпне юлнă эрехпе хăналанăшăн курайми пулчĕ мана. И-и, ухмах выльăх. Çук, яланах мар. Ĕçмен пулсан, чиперех. Çилленнине палăртмасть. Анчах кăштах сыпрăм çеç, хам киле хам ирĕклĕн, лăпкăн кĕретĕп тесе ан та шутла. Катюк, усал милиционер пекех, сыхласах тăрать. Таçтанах туять эрех шăршине. Калăпăр, эпĕ урамран картиш алăкне уçатăп, вăл тепĕр енче симĕс куçне хаяррăн ялтăртаттарса кĕтсе тăрать. Тарса ĕлкĕреймерĕн-тĕк, тӳрех пырса начлаттарать. Çĕрле те çаплах. Нуша хăваланипе пӳртрен тухса, крыльца çинчен анатăп çеç, чип-чипер выртакан качака тăрать те тӳрех ман паталла утать. Мĕн тумалла ĕнтĕ манăн çав выльăхпа? Сутас тесен, арăм яхăнне те ямасть. Качаки сĕтлĕ, тет, сĕчĕ сиплĕ, тет. Чăнах та, юлашки вăхăтра Аленка чылай самайланчĕ... Эрех ĕçме пăрахмалла-и вара?.. Эх-х, мăшкăл!..

## Çапма пĕлмен пушă...

Кĕтӳ ярса килнĕ Матрунь инке пĕчĕк картишне выльăхчĕрлĕх каяшĕнчен тасатас тесе çулăк тытнăччĕ, çав самантра кӳршĕсен енче килкарти алăкĕ шалт уçăлса хупăнчĕ, унтан арçын сассисем хăлхана пырса кĕчĕç.

«Ай-уй... Кам килчĕ капла ытла та ир?—шухăшларĕ Мат-

рунь инке, вĕшле йытă евĕр шĕвĕркке пит-куçлă, çивĕч хăлхаллă хĕрарăм. — Кĕркури, кил хуçийĕ, ĕçе кайрĕ-ха. Урăх кам, мĕнле арçын килме пултартăр çак вăхăтра?»

Çулăкне хурса, хĕрарăм карта патне йăпшăнса пычĕ. Хăмисене çăтă çапнă пулин те, турра шĕкĕр, хушăксем пур. Акă çак пĕчĕк турат куçĕнчен те пăхса тăма шутсăр меллĕ. Çапла шухăшласа, Матрунь инке хăрах куçне кӳршĕсен килкартине тĕллерĕ. «Эй, турă! Милиционерсем! — темшĕн-çке хĕрарăм чĕри картах турĕ.—Хĕвел тухнипе пĕрлех чавтарса çитнĕ. Хуçисем ĕçе тухса кайиччен ĕлкĕрес тенĕ ĕнтĕ. Эй, вaçка, вĕсен те ĕçĕ-хĕлĕ канăçсăр иккен». Пĕр милицонерне, хура уссиллине, курнă-ха. Вăл сайра-хутра килкелесе каять яла. Тепри, çамрăкскер, яштака пӳ-силлĕскер, кунти мар пулас... Акă хайхи пӳртрен Мари кин сиксе тухрĕ. Ах, шутсăр итлес килет те мĕн калаçнине, аякра çав, илтĕнмест. Усиллĕ милиционерĕ кăкăр умĕнчи кĕсъинчен хут листи кăларчĕ, саркаласа кăтартрĕ. Килхуçи хĕрарăмĕ тĕлĕннĕн пĕççисене шарт çапрĕ те, вăрт çавăрăнса, пӳрте кĕрсе кайрĕ. Лешсем те хыçранах утрĕç. «Сăмакун шырама килнĕ ĕнтĕ. Урăх мĕн тума пултăр, — тавçăрса илчĕ кӳршĕ хĕрарăмĕ. — Ухтарччĕр-ха... Ухтарччĕр. Атту, патша майри пекех, пуçне каçăртса. çӳрет. Пĕр кун хирте тислĕк тăкнă чух мĕнпур халăх умĕнче темĕн те пĕр каласа хăртрĕ. Элекçĕ тет мана. Эпир мĕн тунине, мĕнле пурăннине кăна сыхласа пурăнатăн. Пирĕн çинчен сăмах вĕшкĕртесшĕн çеç вĕтеленсе çӳретĕн, тет. Тьфу! Çавăн хыççăн Кĕркури, икĕ кил хушшинчи кивĕ картине пăсса, çĕнĕрен турĕ. Хăмисене епле çăтă çапнă. Хур тăватпăр теççĕ ĕнтĕ мана. Тата мĕн ĕç пур ун, Марин, эпĕ тепĕр чух урараан ӳкиччен ĕçнипе? Унăнне мар, хамăнне ĕçетĕп. Ĕçес çук та— пурăнас çук. Çаплах каларăм хăйне те... Тем час тухмаççĕ тата милиционерсем. Тĕплĕн шыраççĕ ĕнтĕ. Маттур. Ах, тупăрччĕ... Тем пекехчĕ тупсан, — куçне картари шăтăкран уйăрса, Матрунь инке тӳрленчĕ, пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа илчĕ, анчах сивĕ кĕвĕç лăпланаймасăр, шухăша малаллах хăваларĕ. — Пурнăçĕ шутсăр ăнать тата хăйсен. Икĕ ĕне сăваççĕ. Кашни çул, килкарти тулли выльăх ӳстерсе, патшалăха сутаççĕ. Мĕн чухлĕ тырă илеççĕ, мĕн чухлĕ укça... Мари лайăх упăшка тĕлне пулчĕ те ырă курса пурăнать çав. Манăн, авă — пурнăç шухăшĕ пур-и унăн? — эрех кӳпсе тултарать те эрни-эрнипе тăна кĕреймесĕр анкă-минкĕленсе этем ятне ярса çӳрет... Акă, тухрĕç хайхисем,—куçне каллех пĕчĕк шăтăка тĕрĕнтерчĕ Матрунь инке. — Пӳртре туп-

ман апла. Мари кин ампар алăкне уçса пачĕ. Мунчана, нӳхрепе кĕрсе тухрĕç. Пахчана пытарман-ши терес пулас, унта та çавăрăнкаласа çӳрерĕç. Эй-ай-яй! Апла тĕрмешни ахалех пулчĕ, апăршасен. Урама тухрĕç... Ай-уй! Пирĕн паталла утаççĕ мар-и? Чăнах, кунталлах килеççĕ. Эй, тур-тур! Пĕтрĕм... пĕтрĕм. Мĕн тăвас? Хăвăртрах алăка питĕрес те виркĕнес пахча урлă хирелле. — Матрунь инке çенĕке васкаса кĕчĕ. — Ăçта çав пӳртум çăраççийĕ? Çакăнта хутăм-çке. Çук, ниçта та çук. Çĕр тĕпне анса кайнă тейĕн. Э-э, акă, кунтах... тутăр айне пулнă та...

Питĕрс тухас тесе алăк хăлăпĕнчен тытнăччĕ, çав самантра крыльца çине çамрăк милиционер хăпарчĕ.

— Аван-и, Матрена Егоровна! — терĕ вăл çенĕке кĕрсе.— Шыв ĕçесчĕ манăн. Шутсăр ăш хыпрĕ. Э-э, шывĕ кунтах-çке. Ан чăрманăр, хамах, — çапла каласа милиционер кĕтесре ларакан пысăк фляга патне утса пычĕ те, хуппине уçса, куркапа ăсса илнĕ шĕвеке тути патне çывхатрĕ. Çамрăк милиционерăн куçĕсем чарăлчĕç, çинçе куçхаршийĕсем çӳлелле çĕкленчĕç.

— Ку... мĕн? Сăмакун праки вĕт ку?..

— Вăл-и?.. Э-э... Ара, кăмăлăр пулсан тархасшăн. Сирĕншĕн шел мар, — вĕтеленсе илчĕ хĕрарăм. — Ĕçĕр, ĕçĕр. Юлташăра ан пĕлтерĕр çеç. Хамăр хушăра пултăр.

— Тăхтăр-ха, тăхтăр, — тăнламарĕ ăна милиционер.— Матрена Егоровна Илларионова эсир пулатăр-и?

— Ну... эпĕ, — ирĕксĕррĕн сăрхăнтарчĕ сăмахне Матрунь инке.

— Кӳршӳсем çинчен, вĕçĕмсĕр самакун юхтараççĕ, тесе çыраканĕ те эсирех-и?

— Тархасшăн пĕрреллĕхе каçарăр. Ăнсăртран пулчĕ ку... Турра асăнса калатăп... Тек нихăçан та...

Хĕрарăм пуçне чикрĕ те хуллен нăшăклатса, тутăр кĕтессипе куçне шăлса илчĕ.

— Ну и ну-у! — пуçне сулкаларĕ милиционер, вара çавăрăнса, урамра ял çыннисемпе калаçса тăракан юлташне чĕнсе илчĕ. — Иван Сидорч! Килĕр-ха хăвăртрах кунта!

Çапма пĕлмен пушă мĕн тунă тет-ха?

# Йӗре-кула Микула

## Калав

Килкарти алăкĕ уçăлса хупăнчĕ. Ура сассисем крыльца патне пырса картлашкапа хăпарчĕç. «Çук, Максăм мар ку. Максăм утăмĕсем вăрăмрах, вăл хытăрах ярса пусать», — вĕлтлетсе иртрĕ упăшкине кĕтекен Люся пуçĕнче.

— Кĕме юрать-и?

Çуса типĕтнĕ япаласене якатакан хĕрарăм пуçне çĕклерĕ. Ярии уçăлнă алăкра маттур пӳ-силлĕ хĕрарăм курăнчĕ.

— Хуçи пур-и, майри пур-и? — терĕ вăл кĕрсе тăрса,— Хăна килчĕ. Йышăнăр.

— Капа, эсĕ-и? — ĕçне пăрахса кил хуçи ăна хирĕç ыткăнчĕ, ыталаса илсе, темиçе хут чуптурĕ. — Мĕн тери хавас сана курма! Капа, тусăм...

— Эпĕ те тунсăхласа çитрĕм. Мĕнле пурăнаççĕ-ши тетĕп. Юри курса каласма килтĕм.

— Тавах, Капа... Капочка. Атя, ирт малалла. Эпĕ чей лартам-ха, — хĕрарăм утюга сӳнтерчĕ те тĕпелелле ваекарĕ.

— Тăхта-ха... Эсĕ мĕн? Йӗретĕн мар пулĕ-çке! — чарчĕ ăна килнĕ çын. — Куçусем хĕрелсе тăртаннă. Мĕн пулчĕ? Максăм ăçта? Ĕçре? Хм... Мĕнле ĕç пултăр унăн халиччен? Кĕçех саккăр çитет...

Пуçне чиксе Люся нăшăклатса илчĕ, унтан тантăшне ыталарĕ те ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

— Эсĕ мĕн?.. Мĕн?.. Ну, ну... Атя-ха лар, каласа пар.

— Малтан чейник лартам-ха. Çиес те килет пулĕ санăн,— терĕ Люся тĕпелелле утса.

— Кăштах чăмлама хирĕç мар. Килтен тухни тахçанах. Столовăя кĕме вăхăт тупаймарăм. Атя, пулăшам сана.

Икĕ хĕрарăм тĕпелте тĕрмешнĕ вăхăтра манăн вĕсем çинчен çакна каласа хăварас килет. Çамрăк вĕсем. Иккĕшĕ те пĕр çулсенчех пулас. Пĕрле вĕреннĕ, туслă пулнă, çулталăк каярах çеç университет пĕтернĕ. Анчах пăхма шутсăр тĕрлĕ. Люся вăтам пӳллĕ, ансăр хулпуççиллĕ, кăпăшка вăрăм çӳçлĕ. Унăн таса йăпăш пичĕ-куçĕнче кăна мар, çынпа калаçнинче те, пĕвĕ-сийĕ хусканăвĕсенче те чуна илĕртекен темле ачашлăх, чеченлĕх палăрать. Капа пачах урăхла. Вăл çӳллĕ, маттур пӳ-силлĕ, сарлака хулпуççиллĕ. Аллисем вăйлă, çирĕп. Сасси те çамрăк хĕрĕн е хĕрарăмăн пек мар, хулăнрах. Çут-

çанталăк чи малтан унран арçын тăвас тенĕ пулас. Каярах, тем шутпа-çке, пирвайхи шухăшне улăштарнă. Анчах малтанхи кĕлетки-çурăмне пăсса çĕнĕрен тума ӳркеннĕ, вара çаплипех çут тĕнчене кăларса янă.

Ентĕ каçхи апат та çирĕç вĕсем, чей те ĕçрĕç. Хĕвел çаври хĕрелсе тĕттĕм çĕр хыçне пытанчĕ, — кĕтнĕ çын çаплах килмерĕ.

— Урăххисем патне чупать апла... Качака таки! — терĕ Капа. Умри турилькkине хăй умĕнчен сирсе, вăл çемçе пукан хыçне тайăнчĕ. — Кам шутланă Макçăм çавнашкал упăшка пулать тесе. Мĕнле юрататчĕ вăл сана! Мĕнле çунатчĕ саншăн... Халĕ, акă... Çулталăк та çитмен туй туни. Юрĕ, куна эпĕ капла хăвармастăп. Калаçатăп унпа, хытăнах калаçатăп.

— Мĕн усси, — юхса аннă куççульне шăлса илчĕ Людмила. — Тек юратмасть вăл мана...

— Еркĕнĕ кам вара? Палламастăн-и?

— Хула пысăк мар. Кунта нумайăшĕ пĕрне пĕри пĕлеççĕ. Мана киле килсех каласа параççĕ...

— Çук, çук, капла юрамасть. Мĕн те пулин шухăшласа тупмаллах пирĕн. Эсĕ манăн чи çывăх, чи хисеплĕ хĕр-тус пулнă. Ку пĕрре, Иккĕмĕшĕ, Макçăм ман тăван. Атте шăллĕн ывăлĕ. Виççĕмĕшĕ, сире эпĕ паллаштарнă, эпĕ пĕрлешме пулăшнă. Апла, эпĕ те айăплă сан умăнта, — çапла калаçса Капа тăчĕ, аллисене çурăм хыçне тытса, пӳлĕм таврара каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ. — Итле-ха, Люда, — терĕ вăл кăштахран тĕпелте савăт-сапа çăвакан тусĕ патне кĕрсе. — Савăла савăлпа кăлараççĕ, тенĕ ваттисем. — Еркĕн тупас пулать санăн.

— Мĕн калаçатăн эсĕ, Капа? — тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине Люся. — Епле? Урăх арçын? Çук! Çук! Çăвар та ан уç кун пирки! Çапла ята яриччен... Çук! Çук!..

— Вĕçĕмсĕр ан çуклат-ха эсĕ. Тăнла каланине, — чарчĕ тусне Капа. — Çапла, тупмалла сан еркĕн. Сучка хĕрарăмсем мĕнле ихĕлтетнине илтнĕ-и эсĕ? Пĕлетĕн-и вĕсем пек кулма? Ну-ка, кăтарт-ха. Атя, атя, яра пар. Ан вăтан...

Çуллахи тавралăха каç тĕксĕме хупăрласан, урамра хулран хул тытăннă арçынпа хĕрарăм курăнчĕ. Хĕрарăмĕ йăрăс пӳллĕ, йăлтăр-йăлтăр капăр тумпа. Кăпăшка вăрăм çӳçĕ хулпуççийĕ урлă сапаланнă. Арçынĕ хура костюмпа, пуçĕ çинче карттус. Васкамасăр пынă май, вĕсем тем пирки-çке кулакула илчĕç е хĕрӳллĕн пăшăлтатрĕç. Пĕчĕк кĕпер урлă каçса хула тĕп урамне тухсан, арçын карттусне çамки çине пус-

са лартрĕ, хĕрарăмĕ енне тата та çывăхрах тайăнса, çирĕп аллисемпе унăн илĕртӳллĕ çинçе пилĕкне ыталарĕ. Ну, кам вĕсене юратакан мăшăр тесе каламĕ? Çаплах хĕрӳллĕн ыталанса, хăлхаран хăлха пăшăлтата-пăшăлтата, вĕсем çамрăксем хĕвĕшекен çĕрелле, пысăках мар парка утрĕç, ытла та çутă вырăна тухмасăр, йĕри-тавра çавăрăнкаласа çӳрерĕç.

— Ташлакансем хушшинче çук, — терĕ Капа.

— Вĕсене кинора час-часах курăççĕ, — пăшăлтатрĕ Люся.

— Тимлĕрех пăхкаласа çӳрер-ха. Çын нумай. Ку пирĕншĕн лайăх... Авă! Авă парка кĕчĕç. Куратăн-и? Хурăн çумĕнче чарăнса тăчĕç. Макçăм вĕт çавă?

— Çавă... Çавах... Турăçăм... — çамрăк хĕрарăм картах туртăнчĕ. Капа чарман пулсан, чупатчĕ пулĕ.

— Халех пыратăп та суратăп намăссăра куçĕнчен. Лешне, аскăнчăкне, çӳçрен...

— Ан ухмахлан... Ил хăвна алла... Çавăратăп тетĕн-и упăшкуна çапла ăссăрланса? Халăха хăвăнтан култаратăн çеç, — çиллессĕн пăшăлтатрĕ Капа, тантăшĕн аллине çатăртаттарса тытса. — Атя-ха, çывхарар. Эсĕ ихĕлтет, ихĕлтет. Илттĕр вăл, куртăр...

— Хи-хи-хи-хи! Тем те калаçăн эсĕ... Сана итлесе... Хи-хи-хи!

Çитрĕ упăшка хăлхине паллана сасă. Вăл çавăрăнса пăхрĕ, унтан тата...

— Ну, пулчĕ, — пăшăлтатрĕ Капитолина, тусне хулпуççийĕнчен ыталаса. — Халĕ аяккалла пăрăнма юрать. Курăпăр, мĕн пулĕ. Ĕнтĕ эпир мар, вăл пирĕн хыçран йĕрлесе пытăр. Çавăнпа кăштах çӳрекелер те — киле...

Каллех вĕсем çĕрлехи урампа васкамасăр утаççĕ. Хыçран арçын мĕлки йăпшăнать.

— Ытала мана, чунăм. Пăхам-ха, пырать-и, юлмарĕ-и. Ĕненес те килмест... Чуп ту, чуп ту. Куртăр. Чери ытларах вĕчĕрхентĕр, — хаваслăн кулать, ачашшăн йăпшăнать тусĕ çумне çамрăк хĕрарăм.

Акă кил. Картиш алăкĕ патĕнче кăштах тытăнса тăчĕç, унтан кĕрсе кайса çухалчĕç. Чӳречесенче çутă курăнчĕ те кĕçех сӳнчĕ. Тĕттĕм мĕлкс карта çумĕнчен уйрăлчĕ, шăппăн, шутсăр асăрханса, килкарти алăкне уçрĕ, чĕрне вĕççĕн утса крыльца çине хăпарчĕ. Çенĕк алăкне тĕртрĕ. Питĕрмен. Манна ĕнтĕ ытла васканипе... Пӳрт алăкне шаккарĕ.

— Кам унта? — илтĕнчĕ арăмăн пăлханнă сасси.

— Эпĕ! Упăшку!..

Пўрт ăшчикĕ ялтлатса çутăлчĕ. Умра тăракан арăмне аллипе тўрккессĕн тĕксе ярса, арçын хăвăрт малалла иртрĕ, вырăн çинчи утияла сирсе ывăтре, кравать айне пĕшкĕнсе пăхрĕ, тепĕр пўлĕме васкаса тухса, унта айĕн-çийĕн ухтарма пуçларĕ.

— Ăçта пытартăн? Кала! Халех каланă пултăр! — сăрхăнтарчĕ вăл шăл витĕр чĕнмесĕр пăхса тăракан арăмĕ енне çаврăнса. Хаяр сивĕ куççем пите тĕрĕнчĕç, çирĕп пўрнесем хулпуççирен çатăртаттарса тытрĕç.

— Ай! — ыратнине тўсеймерĕ çамрăк хĕрарăм.

Çав вăхăтра алăк яри уçăлса кайрĕ... пўртелле арçын ури ярса пусрĕ.

— Кĕме юрать-и? — илтĕнчĕ хулăн сасă.

Хулпуççие хĕстернĕ çирĕп пўрнесем самантрах пушанчĕç.

— Ну-ка, кĕр-ха, кĕр, — терĕ тĕлĕннĕ хуçа, пĕр самант хускалмасăр тăнă хыççăн. — Ирт... ирт кунтарах.

Килнĕ çын васкамасăр алăк урлă каçрĕ, çаплах васкамасăр, лăпкăн темиçе утăм малалла ярса пусрĕ. Макçăма хирĕç пырса тăчĕ те, карттусне ялт хывса, хаваслăн кулакан питне тăванĕ енне пăрчĕ.

— Қапа!.. Шуйттан... Эсĕ-и? — ахлатса ячĕ Макçăм.

Тем калас пек кĕске вăхăт вăл куçне умри хĕрарăмсем çине тĕллесе тăчĕ, унтан арăмне аллисем çине çĕклерĕ те хаваслăн ахăлтатса кулса çавăрăнма пуçларĕ.

# Çухалнă урок

Калав

Ах, çав вуникĕ-вунвиçĕ çулхи арçын ачасем! Ларма-тăма пелмен шăпăрлансем. Пăхăр-ха эсир вĕсем çине пĕр-пĕр çĕрте ушкăнпа пуçтарăнсан. Вĕçĕмсĕр чупаççĕ, кăшкăрашаççĕ, тавлашаççĕ, кĕçех тытăçса та илеççĕ, çапăçма та яланах хатĕр. Пурин çинчен те манаççĕ вĕсем çав хĕрнĕ самантсенче: вăхăт иртнине те, хырăм выçнине те, ашшĕ-амăшĕ пĕр-пĕр ĕç хушнине те, малтанах пурнăçлама шухăшласа хунă хăйĕн шутсăр кирлĕ ĕç-пуçне те... Шкулта тата... Шăнкăрав янрана, вĕрентекен класра, вĕсем çаплах кĕрсе пĕтеймеççĕ.

— Юрать-и?

— Кĕме юрать-и? — илтĕнет вĕçĕмсĕр.

Асăрхаттарни, ўпкелени, вăрçни усăсăр — пурĕпĕр итлемеççĕ, тĕрĕсрех каласан, çав хĕрнĕ самантсенче никама та

тăнлама пултараймаççĕ вĕсем. Акă кĕрсе пĕтрĕç, вырнаçса ларчĕç. Анчах урок пуçлама иртерех-ха, тăруках лăпланайман класс, пĕр хушă çаплах йăшăлтатать, пăшăлтатать. Пĕрин тетрачĕ çук, тепри ручкине çухатнă, виççĕмĕшĕ вĕренмелли кĕнекине киле манса хăварнă... Юлашкинчен лăпланчĕç.

Умра ларакан çирĕмултă ача çинчен куçне илмесĕр, Ольга Ивановна киле панă ĕçсене тĕрĕслет, ыйтать, итлет, йăнăшсене тӳрлетет, ăнлантарать. Акă вăл доска енне çавăрăнчĕ, мел илсе, çырма тытăнчĕ. Çав вăхăтра парта айĕнчен ала çĕкленчĕ те — сывлăша хутран тунă кайăк ачасен пуçĕ çийĕн пăр-р вĕççе хăпарчĕ.

— Кам ашкăнать? — кăмăлсăр сасăпа ыйтрĕ вăртах çаврăннă Ольга Ивановна.

Класс шăп. Канăçсăр куçсем кăна савăккăн йăлкăшаççĕ. Урок малалла тăсăлать.

Хĕрачасемпе ĕçлеме çăмăлрах. Вĕсем лăпкăрах, итлеççĕ, вăр-вар шуйханмаççĕ. Анчах арçын ачасем... Мĕн-мĕн шутласа тупмаççĕ пулĕ çав шĕвĕрсем урокри ĕç йĕркине пăсма, хаваслăх тупма. Куç ан ил вĕсем çинчен, унсăрăн пăрăн кăна—е хыçалтан çӳçĕнчен туртнă хĕрача айлатса илсе, кӳрентерекене чышкисемпе тавăрма пуçлать, е урай варринче уринчен çиппе çыхнă шăши йăпăртатса чупма тытăнать... Э-э, каласа пĕтерес çук вĕсен мыскарисене... Апла пулин те пĕлет Ольга Ивановна çав ашкăнчăксемпе ĕçлеме, шутлă минутсемпе ăнăçлăн усă курса, уроксене кирлĕ пек иртерме. Анчах паян... Паян çухатрĕ вĕрентекен хăй урокне, вăрларĕç ăна, ахалех сая кайрĕç хаклă самантсем.

Пысăк тăхтавран хашка-хашка чупса кĕнĕ ачасем лăпланса ĕçе тытăнчĕç кăна, алăк яри уçăлса кайрĕ те, класа тасланкă арçын кĕрсе тăчĕ.

— Чăрмантарнăшăн каçарсамăр, — терĕ вăл. Йăл кулчĕ те малтан Ольга Ивановна, унтан вĕренекенсем енне темиçе хутчен пуçне тая-тая илчĕ. — Манăн пĕлтермелли пур. Юрать-и? Ачасем, эпĕ республика тĕп хулинчи пукане театрĕн администраторĕ тата артист. Сире валли пукане театре илсе килтĕмĕр. Каçхине çичĕ сехетре пуçланать. Пурте курма пырăр.

Çакнашкал хыпар ял ачисемшĕн, паллах, пысăк савăнăç. Урок çинчен манса, класс çавăнтах хускалчĕ, малтан хуллен, хăюсăррăн кăштăртатма, унтан хыттăнрах та хыттăнрах шавлама тытăнчĕ.

— Интересле-и театрĕ?
— Кулăшла-и?
— Мĕн çинчен? Упа пур-и?
— Кашкăр та-и?
— Тилĕ тата? — илтĕнчĕç пур енчен те чăтăмсăр, хаваслă сасăсем.

— Пур, пур. Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те,— тăсланкă кĕлеткине йăкăл-якăл авлаласа, кăтра пуçне сула-сула пĕлтерчĕ артист. Нумай калаçса тăмарĕ вăл, тухрĕ. Анчах ун хыççăн клас алăкĕ хупăнчĕ кăна, хыçалта ларакан пĕр ашкăнчăкĕ сиксе те тăчĕ.

— Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те пур, — терĕ вăл, сассипе те, кĕлетки-çурăмне хускатнипе те пĕлтерӳçĕ евĕр пулма тăрăшса.

Класс харăссан, хаваслăн ахăлтатса ячĕ. Пуçланчĕ вара...
— Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те пур...
— Хи-хи-хи!
— Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те пур...

Халран кайрĕ Ольга Ивановна татăлнă урока тăсас тесе. Анчах ытла та шуйханса кайнă ачасем ăна тăнлама вăй-хал çитерейменĕç. Çакна ăнланнă учительница вĕçĕмсĕр ихĕлтетекен, авкаланакан-хуçкаланакан ачасене юмах итлеме сĕнчĕ. Ерипен-ерипен лăпланчĕç, тимлесех итлеме пуçларĕç. Анчах шăнкăрав янрарĕ кăна, самантрах хускалнă класс пĕрпĕринпе ăмăртса, пĕр-пĕрне пӳлсе каллех хаваслăн шавлама тытăнчĕ.

— Упи те пур, кашкăрĕ те пур, тилли те пур...

Пукане театрĕ, паллах, питĕ лайăх, çапах çухалнă урока та шел...

# Гипнотизер

(Калав)

Ку таврари çын мар эпĕ. Куккакасси тенине илтнĕ пулĕ. Çав ялтан. Автобус кĕтетĕп, хамăр енне каяканне. Тĕп хуларан гаврăнатăп-ха. Ара, йăлăхтарса çитерчĕç — вĕçĕмсĕр йыхрав яраççĕ, киле те темиçе хут пычĕç. Çавăнпа кайса аслисемпе тĕплĕн калаçса килем терĕм. Мĕн пирки тетĕр? Ĕçлеме чĕнеççĕ, икĕ-виçĕ театртан. Талант теççĕ мана. Пĕлтĕр сцена çине тухман пулсан, хам мĕнле çынне пĕлмесĕрех ĕмĕре irттертĕм. Вăт çапла, ачасем.

Иртнĕ çул вара пĕр кĕркуннехи каç, пирĕн Куккакасси культура çуртĕнче тĕнчипе паллă гипнотизер хăй ăсталăхне кăтартать тесе пĕлтерчĕç. Ку, хыпар мана хавхалантарчĕ. Икĕ çул каярах пуçана патне хулана кайсан, курнăччĕ-ха эпĕ пĕрне. Куç пăвса çывăратса ячĕ те хăй патне сцена çине пынă çынсене — и-и-их-х! мĕн тĕрлĕ мыскара кăтартмарĕ пулĕ. Кулса вилмелле... «Ку вара , çĕршывĕпе паллăскер, пушшех ăста ĕнтĕ», — тесе шутларăм та, çывăхрах, лайăхрах курасчĕ тесе, клуба иртерех кайрăм, малти рете лартăм. Кĕçех зал лăках тулса ларчĕ. Куракансем таврари ялсенчен те нумайăн килнĕ. Урамра темиçе автобус, çăмăл машинăсем лараççĕ. Акă чаршав уçăлчĕ. Сцена çине хĕрĕхелле çывхарнă çын тухрĕ. Этемĕ пăхма аптрамасть пек. Вăтам пÿллĕ, яштака çан-çурăмлă. Тулĕк тÿрех палласа илеймерĕм — те арçын, те хĕрарăм. Чи малтан çÿçĕ вăрăм пулсан та, арçын пек туйăнчĕ — кĕлетке-çурăмĕ те, сасси те. Лайăхрах тинкертĕм те — ай-уй! — тутине хĕрлетнĕ, куç айне кăвак сăрăпа сăрланă. Акă хайхи çак çурма арçын, çурма хĕрарăм кĕсйинчен пысăках мар йăлтăр-йăлтăр çаврашка туртса кăларчĕ.

— Аларсен пÿрнисене пĕр пĕрин хушшине хурса чăмăртăр та акă çакăнта тинкерсе пăхăр, — хушрĕ вăл, йăлтăрккка япала çине кăтартса. — Халĕ уйăрăр. Кам та кам пултараймасть, ман пата хăпарма ыйтатăп.

Эпĕ пÿрнесене турткаласа илтĕм — чиперех, çыхланман. Кĕçех залран пĕрин хыççăн тепри гипнотизер патне утма тытăнчĕç. Тем амакĕ пулчĕ-çке çав самантра мана. Такам аякран тĕртрĕ тейĕн. Те тата та çывăхрах курас килчĕ-ши çак этем мĕн хăтланнине. Пÿрнесене юриех тепĕр хут яваларăм та таплаттартăм сцена çине.

Гипнотизер пире пĕр ретĕн çынсен енне пăхтарса тăратрĕ.

— Аларсене ярăр, — терĕ.

Чăнах та, пурин те аллисем лăштăрах усăнчĕç. Тытăнчĕ хайхи хăй ĕçне. Хирĕç пырса тăрать те — çывăр тет çеç. Акă пĕри пуçне усрĕ, сулкаланкаласа тăрать, теприн хулпуççийĕ лăстăрах кайнă, виççĕмĕшĕ лĕнчĕрех усăннă — çывăраççĕ. Ĕнтĕ черет ман пата çитрĕ. «Мĕн тума хушĕ-ши ку мана çывратса ярсан?» — тÿн! пырса çапрĕ пуça сивĕ шухăш. — Упа туса пыл вăрла тесен юрĕ-ха. Вăл нимех те мар. А леш, хулара курнă гипнотизер пек, савни тесе, пĕр-пĕр арçынна пырса ыталама хушсан... Шăмшак тăрăх сивĕ чупса кайрĕ,

Ара, кун хыççăн ача-пăча та пӳрнепе тĕллесех кулма тытăнать вĕт манран. Укçа тӳлесех хамран çапла мăшкăллаттарас-и? Арăм тата... кăтартĕ вăл сана савни ăçтине. «Çук, — çирĕппĕн татса хутăм хама хам,—хĕрĕх пилĕк çул çын мăшкăлĕ пулман, сана та, камите, маххă памастăп».

Пырса тăчĕ çак мана хирĕç, куçран чăр-р пăхрĕ. Эпĕ те пуçа мăнкăмăллăн каçăртрăм та ун çине шăтарасла тĕллерĕм.

— Çывăр, — терĕ.

— Ху çывăр! — хирĕçлерĕм эпĕ.

— Çывăр... çывăр...

— Ху çывăр! Ху çывăр!

Чăнах та, умра тăракан гипнотизер пăрăнчĕ те, сасартăках лĕнчĕрленнĕ кĕлеткипе стена çумне тайăнчĕ. Тинкеререх пăхрăм та — ай-уй! чăнах çывăрать... Ак, тамаша! Ак кĕтмен япала! Ним тума аптранипе йĕри-тавра пăхса илтĕм. Ман çумрах çывăратса янă çынсем тăраççĕ. Хăй те кунтах, харлаттарать кăна. Курма килнисем гӳрех ăнланмарĕç-ха мĕн пулнине. Шăпăрт кĕтсе лараççĕ. Мĕн тумалла ĕнтĕ манăн? Хăранипе алă-ура чĕтреме пуçларĕ. Сцена хĕррине хăюсăррăн пырса тăтăм та:

— Вăт, юлташсем, гипнотизер та çывăрса кайрĕ, — терĕм.

Тытăнчĕç ахăлтатма. Алă çупаççĕ, урисемпе тапăртатаççĕ, шăхăракансем те тупăнчĕç. Ман йĕрес килет, вĕсем каçса кайса кулаççĕ.

— Хăвăрах куратăр, — тетĕп,—çак шăв-шава илтсе хăшĕ те пулин вăранмалла пек. Вĕсем, авă, хăнк та тумаççĕ... Ман сĕнӳ пур — ирччен çывăрччĕрех. Чăрмантарар мар. Шăппăн-шăппăн тухар та саланар килсене... Кам та кам çакăнпа килĕшет, алă çĕклеме ыйтатăп.

Ну, мĕн каланине пурне те астумастăп. Ăçтан астăвăн, харанипе чун таçта ура тĕпнех пытанчĕ пулсан. Тин ăнкарса илчĕç манăн ентешсем. Малтан шăп пулчĕç. Унтан, эй, тăвăл çĕкленчĕ тейĕн.

— Ниçта та каймастпăр. Çывратса яма пĕлетĕн пулсан, вăратма та пĕл!

Ну, лекмеллипех лекрĕм. Çурăм тăрăх çивĕ тар шăпăртататать. Ăçтан çыхланса пулчĕ ку этемпе? Пытăм гипнотизер патне, çаннинчен туртатăп, питĕнчен тĕрткелетĕп.

— Вăран, сана халăх кĕтет, — тетĕп.

Мăшăлт та тапранмасть. Юлашкинчен, чун тарăхса кайрĕ. Кăнт тутартăм аяккинчен.

— Эсĕ, мĕн, кунта çывăрма килтĕн-им? Кăтартам эпĕ сана пăлахая персе тăма! — терĕм. Вăранчĕ! Хи-хи-хи! Ĕненместĕр-и? Вăранчĕ. Куçне уçрĕ, пуçне ялт çĕклерĕ те ман çине кăн-н пăхрĕ. Эпĕ савăннипе кулла чараймастăп. Вăл çаплах чăрлаттарса пăхать. Унтан нимĕн пулман пекех сцена варрине ак çапла йăрт-йăрт утса тухрĕ те эх, кулкаласа пуçне таять, эх, ман алла тавтуса чăмăртанă пек тăвать. Эпир иккĕн пĕр каварлă пулса, юри халăха култарма шўт тунă тесе ĕнентересшĕн ĕнтĕ. Çыннисем, чăнах та, тата аллисемпе шăпăртаттарма тытăнчĕç.

— Халĕ сцена çинчен ан та, таплаттар киле, — сивлеккĕн пăшăлтатрĕ гипнотизер.

Мĕнле таплаттар? Ак тамаша! Эпĕ, мĕн, билетсăр кĕнĕ-и? Ĕçсе-супса йĕркене пăснă-и? Шутлăр-ха эсир, — тăстан килнĕ çич ют мана хамăр ялта юнаса хăратасшăн. Тарăхса кайрăм.

— Шăпăрт! — терĕм хайхине, каллех куçĕнчен тинкерсе пăхса. — Çын евĕр калаçма пĕлместĕн пулсан, каллех çывратса яратăп акă.

Чĕлхи çавăнтах çемçелсе кайрĕ.

— Тархасшăн, ăнланăр мана, — тилмĕрсе пăшăлтатрĕ çĕршывĕпе чапа тухнă хайхи асамçă. — Эсир кунта чух, эпĕ ăнăçлă ĕçлеме пултараймастăп. Мĕншĕн тесен сирĕн гипноз вăйĕ манăннинчен сулмаклăрах.

Чăн-чăн сăмах — çаплах каласа хучĕ.

Мĕн тăвăн? Шеллерĕм ăна. Тухса кайрăм клубран. Чăнах ĕнтĕ вăл айăплă мар-çке манăн куç вăйĕ унăннинчен хăватлăрах пулнăшăн...

Çавăнтанпа канлĕх памаççĕ мана тĕп хулари тĕрлĕ театрсенчен. Ĕçлеме чĕнеççĕ. Пĕри те йăпăлтатать, тепри те астарать. Çук, çук, каймастăп. Канителлĕ пурнăç вăл, ялтан яла, хуларан хулана куçса çўресси. Тата хĕрарăмла çўçе вăрăм ўстерсе ярса, камит евĕр сăрланса... И-м, ак ман автобус çитрĕ... Ну, сывă пулăр... Э-э... асăрхаттарса хăварамха — енчен те пирĕн патăрти çынсенчен кам та пулин мана суеç Петюк вăл тесен, ан ĕненĕр. Тупата, ĕмĕрне пĕр сăмах суйса курман...

# Султан

Калав

Çу кунĕсемпе пĕрле отпуск та персе çитрĕ. Мĕнле ирттермелле-ши ăна? Темиçе çул каялла кун пирки пуçа ватма кирлĕ марччĕ. Тăван профсоюза заявлени çырса паратăн çеç. Хура тинĕс хĕрринче те шутлă вăхăта хаваслă ирттернĕ Тарас Никонорыч, кану çурчĕсенче те пулнă, турпутевкăпа ют çĕршывсенче те çӳренĕ. Анчах улшăнчĕ пурнăç, санатори, кану çурчĕсен алăкĕсем ку чухне тĕрлĕ майпа пуйса кайнă хулăм кĕсйеллисем умĕнче çеç уçăлаççĕ. Халĕ ĕнтĕ ĕçĕ те йĕркелли çук, ĕçлесен те вăхăтра тӳлемеççĕ. Çапах ăçта та пулин каймаллах. Подъезд умĕнче кунĕ-кунĕпе домино шаккаса ларнинче ырри сахал. Анчах ăçта?

«Яла кайсан мĕнле-ши?» — пырса кĕчĕ пуçа шухăш. Ашшĕ-амăшĕ çук ĕнтĕ Тарас Никонорычăн ку тĕнчере. Йăмăкĕпе шăллĕ те тахçанах хулара пурăнаççĕ. Амăшĕн тăванĕ Мариш аппăшĕ пур-ха. «Ял санатори мар ĕнтĕ, — шухăшлать арçын. — Çапах... уçă сывлăш, килте ӳстернĕ таса пахчаçимĕç. Ир-каç халĕ кăна сунă ăшă сĕт. Сăра та чаплă тăвать Мариш аппа. Ĕçсе тăранмалла мар тутлă. Тата укçа-тенкĕ те сахалтарах пĕтет унта... Каятăп. Арçын тумалли ĕç те пайтах пулĕ-ха. Мариш аппа хуçалăхĕнче. Хăçантанпа пĕччен пурăнать те. Пулăшас пулать тăвана. Çитетĕп те, акă, çав кунах ĕçе тытăнатăп. Кашни кунах, иртерех тăрса хире чупма тухатăп, шыва кĕретĕп. Пĕви, турра шĕкĕр, ял хыçĕнчех. Пĕр сăмахпа, аппана та усă пулать, хамăн та сывлăх çирĕпленет».

Çакăн евĕр çутă шухăшсемпе хавасланса Тарас Никонорыч çула пуçтарăнчĕ.

Анкартинче çум çумлакан Мариш аппа пралукпа пыракан тăванне тӳрех палласа илчĕ. Хуралнă аллисене саппунĕпе шăлкаланă май, васкаса килкартине кĕчĕ, алăкне уçса ячĕ.

— Тарас, ачам, эсех пултăн-и? Турăçăм, мĕнле килме пĕлтĕн?—терĕ вăл шывланнă куçне алă тӳртĕшĕпе шăлкаласа.

Хĕрĕхрен иртнĕ пирĕн героя ялта хăй ячĕпе çеç чĕннĕрен, малашне эпир те унăн ашшĕ ятне асăнмăпăр.

— Отпускра эпĕ халĕ, Мариш аппа. Сана курма тата

хуçалăхра кăштт а пулин пулăшас тесе килтĕм. Қала, мĕн тумалла...

— И-и, сăпаççипах сана, ачам, сăпаççипах... Ĕçĕ тармĕха тупăнĕ... Вăл вилсен те виçĕ куна юлать теççĕ те. Халĕ кан-ха çул çинчен. Пÿрте кĕрер-ха... Қашни çулах кĕтетĕп те. Килместĕр çав, килместĕр. Атя-ха пÿрте. Курманни хăçан... Қаласа пар, мĕнле пурăнатăр? Пурте сывах-и, чиперех-и? Кин тата?

Çапла кăмăллăн шăкăлтатса хаклă хăнана кил хуçи тирпейтĕ пустарнă пысăк мар пÿрте чĕнсе кĕчĕ, сĕтел çине апатçимĕç хатĕрлерĕ, çуттине те кăларчĕ.

— Килти сăра юрататăн-ха эсĕ. Çиччас, кĕçĕрех вĕретсе лартатап, — хыпкаланчĕ савăннă тăван.

Унтан чылаях хĕрнĕ Тарас крыльца çине тухса пирус чĕртрĕ, умри тĕтĕме алă тупанĕпе сиркелесе, кăмăллă питкуçпа йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ. Çав самантра хапха айĕпе хĕсĕнсе урамран картишне автан кĕчĕ, ун хыççăн темиçе чăх курăнчĕ. Палламан арçынна курсан, автан васкамасăр крыльца çывăхне пычĕ.

— Кик-кик-как-как! — терĕ вăл хаяррăн, шăрçа евĕр çап-çавра йăлтăркка куçне хăна çине тĕллесе.

— Ну, автан! — терĕ Тарас Мариш аппа юнашар пырса тăрсан. — Мĕнешкел кĕрнеклĕ! Епле капăр. Пĕсехи чăн-чăн ылтăн тейĕн. Йăлтăртатать кăна. Мĕнле мăнаçлă тата...

— Çапла, кĕрнеклĕ. Çапла, капăр, — хуравларĕ Мариш аппа кăмăллăн. — Ялта ун пек ăратли урăх çук. Кÿрше арçынĕ ăна Султан тет.

— А мĕн? Тĕрĕс. Маткисем шутсăрах юратаççĕ пулĕ ĕнтĕ. Пăх-ха, вăл ăçта, вĕсем те унтах çÿреççĕ.

— Çапла, хăйĕнчен ниçта та уйăрмасть. Пĕрлех илсе çÿрет. Хăй вара, — хĕрарăмăн тĕксĕмленнĕ куçĕсем хаваслăн йăлкăшса çуталчĕç. — Хăй инкесем патне те чупма хирĕç мар. Пускилсен автанĕ вилчĕ те, çиччас вĕсен енне йăпăртатса каçса каять.

— Инкесем тетĕн... Ха-ха-ха, — кăмăллăн кулса ячĕ арçын.

— Анчах арăмĕсем çывăхне ют автан ан пыр. Тÿрех çапăçма тытăнать, — çаплах кулкаласа сăмахне малалла тăсрĕ Мариш аппа. — Шутсăр çапăçма юратать. Тем пулсан та парăнасшăн мар. Урараҥ ÿкичченех хирĕç сикет. Нумай пулмасть аран-аран тайкаланса килчĕ кĕчĕ. Чеп-чĕр юн. Юрла-

ма ăста тата... Сасси уçă. Ир тăрать те тытăнать шарлаттарма.

Пĕр ури çинчен теприн çине юлхавлăн пускаласа, çывăхрах çӳрекен автан çынсем хăй пирки калаçнине тăнлать тейĕн — çап-çавра куçне ялкăштарса, вĕсем çине пăхкалать, хĕп-хĕрлĕ вăрăм киккирикки унталла-кунталла сулланкалать. Вара, юрласа кăтартам-ха эпипн сире тенĕн, çирĕп çуначĕсене шрат-шарт çапрĕ те, вăрăм мăйне малалла тăсса, хыттăн, янравлăн авăтса ячĕ.

— Ки-ки-ре-ку-у!

— Маттур, Султан. Атя, яра пар. Пĕлтер таврана ху пурри çинчен. Никамран та ан хăра,—мухтарĕ ăна хăна.

Кас кӳлĕм шăрăх лăплансан, икĕ тăван пахчара утă пуçтарчĕç. Типнĕ курăка сенĕкпе тире-тире илсе Тарас ăна аслак çине йăтса купаларĕ.

— Шăрши... шăрши мĕне тăрать,—терĕ вăл. — Хулара укçапа та илейместĕн çакнашкал сиплĕ сывлăша. Çывăрма çакăнта вырăн сарса пар мана, Мариш аппа.

— Хам та çаплах шутларăм-ха. Пӳртре пăчă. Тата эпĕ ир тăратăп та кĕрсе тухса чăрмантарăп сана канлĕ çывăрма.

— Çук, çук, пӳрте мар, — тăванне пӳлсех хирĕçлерĕ хăна. —Çакăнта. Çакăнта çеç...

Тарас автан авăтнине илтсе вăранчĕ. Куçне уçрĕ — тул çутăлнă. Ир-ха, хĕвел те тухман пулас. Мариш аппа выльăхчĕрлĕхне картишĕнчен урамалла хăвалани илтĕнет. «Тăмалла-ши?.. Хире чупма каймалла, шыва кĕмелле»,—вĕлтлетрĕ пуçра канăçсăр шухăш. Анчах ытла та çывăрас килет-çке. «Каярах... Ыран... Аха... ыран», — хуса ячĕ ăна тепри.

Автанĕ вара янраттарать кăна юррине. Тарас пуçне утиялпа хупларе. Усси çук. Хуть хуса яр çав карма çăвара, хуть анса тар урăх вырăна.

— Эсремет карланки. Çакăнта килсе çухăрмасăр урăх вырăн çук-ши сан валли? Кша, мур çăварĕ! — кăшкăрчĕ Тарас аслăк хĕрне упаленсе пырса. — Анса ярса тытатăп та акă, тĕкна-çӳçна хăвармăп. Çӳре вара çаппа-пакартан тĕнчене култарса. Пĕр чăх та хăй çывăхне ямĕ сана.

Маттур автан, юрлама чарăнса çын сăмахĕсене тăнласа тăчĕ, унтан çывăрах эппин тенĕ пек чăххисемпе тем çинчен кăкăлтатса, аякалла пăрăнса утрĕ.

Тепĕр ир янравлă, хаваслă кикиреку ăна татах тутлă ыйхăран вăратрĕ.

— Каллех! — тарăхса шухăшларĕ Тарас.

Сиксе тăчĕ, лупас хĕрне пырса аялалла пăхрĕ.

Инçе те. мар чăхсем çирĕп чĕрнисемпе çĕре чавкаласа çӳреççĕ. Автанĕ те унтах, вăрăм мăйне тăса-тăса каçса кайсах авăтать.

Анса тăрăлтаттарма Тарас ӳркенчĕ, мĕнпе те пулин перес тесе унăн-кунăн пăхкаларĕ — нимĕн те курмарĕ.

— Ма типсе лармасть сан пыру! Ма çăпан тухмасть ăна! —чышкисене чăмăртасах чашкăрчĕ тарăхнă арçын. — Тупанна юрăç...

Тăмалла-ши?.. Хĕвел тухнă-ха, çапах иртерех пек... Унтан вăрт пăрăнчĕ те, ăшă утиял айне чăмса, хăлхине минтерпе хупларĕ... Тĕлĕрсе кайнăччĕ, Мариш аппăшĕ пырса чĕнчĕ.

— Тарас, ачам, тăр-ха, тăр... Ĕнер çăлран кăларнă шыв ĕçрĕм те, çав сивĕ ларчĕ-ши. Кăшт пăркаланма та памасть, шутсăр шăмшак ыратать, — терĕ вăл тăванĕ аслăк çинчен сиксе ансан.— Ĕнене те кӳршĕ хĕрарăмĕ суса пачĕ... Ĕç хушас тетĕп сана. Анкартинче пĕр кĕтес çулман курăк юлчĕ. Кĕскерехчĕ те, хăвартăм эпĕ ăна. Çавна сывлăм типиччен çулса пăрахасче... Тата çак чӳлмеке нӳхрепе антарса лартха. Кунашкал шăрăхра сĕт тавраш кĕçех йӳçсе каять вĕт... Эпĕ фельшăр патне кайса килем-ха. Халиччен пычĕ, уçрĕ пулĕ ĕçлекен пӳртне. Тен, сĕрме эмель парĕ, — çапла каларĕ те Мариш аппа, ыратакан пилĕкне сăтăркаалас, картишĕнчен тухса кайрĕ.

Тарас анаслакаласа çава йăтрĕ, анкартине тухса, юлнă курăк лаптăкне çулса пăрахрĕ, сапаларĕ.

Çанталăкĕ, чăнах та, иртенпех шăрăх, йĕп-йепе тара ӳкнĕ арçын тумне хывса çăвăнчĕ, вара труси вĕççĕнех лаççа кĕрсе, тулли сĕт чӳлмекне илсе тухрĕ, ăна икĕ аллипе те хăй умне тытса, нӳхреп енне асăрханса утрĕ.

Çак таçтан килнĕ ют çынна ку кил-çуртра хăй камне кăтартас шутпа-ши е ирсерен вырăнĕ çинчен тăра-тăра ятланăшăн тавăрас тесе, тен, ытла та çапăçас килнипе, сывăхрах çӳрекен Султан чӳлмек йăтнă Тараса ирттерсе ячĕ те хыçран тӳрех çара урисем çине сиксе ларчĕ, çунаттисемпе çапрĕ, чĕрнисемпе чĕрмелерĕ.

— Ай! — кăшкăрса ячĕ çакна кĕтмен арçын, сĕмсĕре ури çинчен аяккалла сирсе ывăтса. Чӳлмек тайăлчĕ, кăшт çеç алăран тухса ӳкмерĕ. Шурă шĕвек çара хырăм тăрăх йăпăртатса юхрĕ.

— Эсĕ мĕн, ухмаха ертĕн-им? И-и, тăнкки!

Сирпĕнсе кайнă автан хăвăрт сиксе тăчĕ, хаяррăн ялкă-

шакан куҫне ҫын ҫинчен илмесӗр, ҫапӑҫма хатӗрленсе ҫӗр ҫумне лӑпчӑнчӗ.

— Мӗ-ӗн?.. Вӑрҫас тетӗн-и? Манпа-и? Тӑхта эпӗ сана!..

Чӳлмеке вӑр-вар ҫӗре лартса, Тарас лаҫ ҫумне тайӑнтарнӑ ҫаппа ярса илчӗ те вӑшт сулчӗ хайхи чӑркӑш ҫине. Пӗрре... иккӗ... виҫҫӗ...

— Кӑт-кӑт-кӑти-ик! — кӑшкӑрса ячӗ чӑрсӑр кайӑк юлашкинчен хаяр сасӑпа, аяккалла сиксе ӳксе

— Э-э, таратӑн-и? Кӑтартам эпӗ сана манпа ҫапӑҫма. Эпӗ пускил автанӗ мар. Акӑ сана! Акӑ! Акӑ!

Ниҫта кайма пӗлмен Султан, хаяррӑн ҫухӑрса пӗчӗк килкарти тавра ывтӑнать.

— Кӑт-кӑт кӑти-ик! Хурах! Хурах!

Ун хыҫҫӑн хыттӑн кӑтиклетсе чӑхсем виркӗнеҫҫӗ, хыҫра вӑрӑм ҫапӑ тытнӑ Тарас чавтарса пырать.

— Акӑ! Акӑ сана!

Юлашкинчен, пӗчӗк шӑтӑкран хӗсӗнкелесе, автан пусма айне чӑмрӗ. Сехри хӑпнӑ чӑхсем ӑҫта кирлӗ унта тарса пытанчӗҫ. Арӑмӗсем умӗнче намӑс курнӑ маттур автан, пусма айӗнчен тухмасӑр нумайччен хаяррӑн туллашрӗ. Ӑна итлесе, унпа пӗр пулса, чӑхсем те ҫиллессӗн какӑлтатрӗҫ. Кӑмӑлӗ тулнӑ Тарас сӗте нӳхрепе антарса лартрӗ, крыльца ҫумне таянса чӗлӗм туртса ячӗ.

— Ай тур-тур! Кам шуйхатрӗ ман чӑхсене ҫаплах?—пырса кӗчӗ килкартине Мариш аппа. — Пӑсара тапӑнмарӗ пулӗске?

— Акӑ, пӑх, — тӑсса кӑтартрӗ Тарас чӗрмелесе юнланнӑ урине. — Сӗт чӳлмекне кӑшт ҫеҫ алран ӳкермерӗм.

— Ай-уй! Автан-и? Ҫапӑҫать-и? — тӗлӗнчӗ Мариш аппа. —Темшӗн килӗштермест апла вӑл сана. Пускилте те пур унӑн ҫавнашкал ҫын. Курсан, лӑпкӑн иртсе ҫӳреме пamасть.

Ҫапӑпа хыҫран хӑвалакан арҫынран пусма айне пытанма тиврӗ пулин те, Султан улшӑнма шухӑшламарӗ. Унччен хи пекех, ирсерен лупас ҫывӑхне пырса, ҫуначӗсене ҫапа-ҫапах янравлӑ сассипе чылай вӑхӑт авӑтрӗ. Сиксе ана-ана хӑваласа та пӑхрӗ ана Тарас. Усӑсӑр. Кӑшкӑрса-ҫухӑрса автан пусма айне пытанать-ха, анчах тепӗр ир ҫутӑлнӑ-ҫутӑлман каллех лупас ҫывӑхӗнче ҫӳрет. Унтан Мариш аппӑшӗ тӑванне чӑлана сарса пачӗ. Вара Султан ирхи концерчӗсене... чӑлан ҫывӑхӗнче ирттерме тытӑнчӗ. Кунран кун хаярланса пычӗ. Пур ҫӗрте те Тараса йӗрлеме пуҫларӗ. Картишӗнче курать-и, урамра-и, тӳрех чупса пырать. Асӑрхамасан, хирӗҫ

тăмасан, пуç çипе те сиксе ларма пултарать. Паян та, акă, Тарас пӳртре уçă чӳрече умĕнче хырăнма пуçларĕ кăна, çавра куçĕсене хаяррăн ялтăртаттарса, пырса та тăчĕ. Арçын çипе аялтан çӳлелле пăхса е чăтăмсăррăн пĕр ури çинчен теприн çине пускаларĕ, е чӳречерен вĕçсе кĕрес пек, хăратасшăн-ши, çĕр çумнелле лăпчăна-лăпчăна ларчĕ.

— Тарас, ачам, — чăтаймарĕ юлашкинчен Мариш аппа. —Каланăшăн ан çиллен те... Каятăн пулĕ киле. Пурпĕрех пăхăнтараймастăн эсĕ ăна. Хăвах куратăн, усаллансах пырать. Каплах пулсан, малашне хампа та çапăçма пăхĕ. Тата вĕçĕмсĕр хăваласа шуйхатсан, чăхсем килтен сивĕнĕç, çăмарта тума пăрахĕç, кӳршĕсем патне кайĕç.

Кӳренме-и. Çакна илтсен Тарас çăмăллăн сывласа ячĕ. Кунсерен патак е çапă тытса, ăнсăртран хыçалтан сиксе ларасран унăн-кунăн пăхкаласа çӳресси кама килĕшет. Кĕçех ял кулма тытăнать вĕт... Ни йĕркеллĕ çывăрма, ни канма. Çапах кăшт та пулин ĕçлесе пулăшас тенĕччĕ вăл Мариш аммăшне хуçалăхĕнче. Пулмарĕ Кăнтăрла ытла шăрăх, иркаç... Ну, халĕ хăех кай тет пулсан... Ирсерен, автанпа пĕрле вăранса, хире тухса чупма вăй-хал çитереймерĕ вăл. Шыва кĕме те каяймарĕ. Хулара пурăнма хăнăхнă пурнăç йĕрки ялта та çаплах шурĕ.

Хăнара лайăх, килте лайăхрах теççĕ... Тепĕр ир Тарас япалиссене вăр-вар сумка чикрĕ, аппăшĕпе сывпуллашрĕ те хаваслă кăмăлпа çула тухрĕ. Ăна курсан, урамра çӳрекен Султан, чăххисене пăрахсах хыçран васкарĕ. Чупрĕ, чупрĕ. Вăрăм утăмсемпе вашлаттарса пыракан арçынна хуса çитеймессине ăнланса, чарăнчĕ. Вара пуçне çĕнтерӳллĕн каçăртрĕ те хыттăн, мăнаçлăн янраттарса ячĕ.

— Ки-ки-ре-ку-у!

## Мухмăра пула..

Ехремĕн чăтма çук пуç ыратать. Çунтарать чуна усал мухмăр. Ăçтан тупса ĕçес-ши пĕр черкке те пулин? Кам патне кайса ăша лăплантарас-ши? Шухăшĕпе Ехрем килрен киле кĕрсе тухма тытăнать. Эрехлĕ çынсем пур-ха ялта, анчах вĕсем патне кайнипе кайманни пĕрех.

«Селĕп Çинукăн çук-ши?» — пырса кĕрет пуçа иккĕленчĕк шухăш.—Сайра-хутра юхтарать теççĕ ăна çав чуна вĕчĕлтеттерекен шĕвеке. Юхтарать пулмасăр. Унсăрăн пĕччен хĕрарăм хуçалăха мĕнле тытса пытăр. Пахчине те сухалат-

тарас пулать, ҫӗр улмине те лартмалла, выльӑх-чӗрлӗх пусма та арҫынна чӗнмелле. Пушӑ спасибӑшӑн кам туса парать?

«Ҫавӑнта ҫеҫ тупма пулать»,—шутларӗ Ехрем. Васкаса вырӑнӗ ҫинчен тӑчӗ, хӑпӑл-хапӑл тумланчӗ те танклаттарчӗ урампа. Ҫанталӑкӗ — хура сивӗ кӗр — ахаль те тунсӑх чуна пушшех тӗксӗмлетет.

— Ҫинук, мухмӑр чуна ҫиет. Ырӑ ҫын пулса ярса пар-ха кӑшт та пулин.

— Ҫук, пӗ-ӗ тумлам та ҫук, — сулкаларӗ пуҫне селеп хӗрарӑм.

— Ну, Ҫинук, турӑ пул, кӗлтуса ыйтатӑп. Вилетӗп вӗт, вилетӗп...

— А-а, калаам-ҫке, ҫук теем. Ӑҫтан тупса паас манан ҫук пулсан?..

Тем каласан та, темле ӗнентерсен те тӑнласшӑн мар Ехрем. Ярса пар та ярса пар. Тилмӗрет, тархаслать, йӑпӑлтатать. Юлашкинчен, Ҫинук тарӑхса кайрӗ.

— Ҫук тетӗп. Ҫу-ук. Ӑҫтан илес, ҫук пулсан. Мӗн, сӑаса паас-им?

Ӑнланмарӗ ӑшӗ ҫунакан Ехрем селӗп Ҫинук сӑмахӗсене. Паас-им тени ҫеҫ хӑлхана кӗчӗ.

— Вӑт-вӑт. Пар-ха хӑвӑртрах, пар, — хавасланчӗ вӑл.

Мухмӑрпа аптранӑ арҫын ҫине Ҫинук кӑн-н пӑхрӗ те васкамасӑр пӳртрен тухрӗ. Вӑхӑт нумай та иртмерӗ, пӗчӗк алтӑр йӑтса кӗчӗ.

— Акӑ, ме, — тӑсрӗ вӑл савӑта Ехрем енне. Лешӗ ӑна чӗтрекен аллипе ярса тытрӗ те тӳрех ҫӑварне ӳпӗнтерчӗ.

— Мӗн вара ку сан? — ыйтрӗ вӑл ҫуррине пушатнӑ алтӑра тути патӗнчен сирсе. — Мӗн патӑн эсӗ мана?

— Ху ыйтӑан вӗт. Ху паа теен. Сӑк вӑл! Сӑк.

Ехрем алтӑра вӑйран урайне ҫавӑрса ҫапрӗ те, алӑка шартлаттарса, тухса вирхӗнчӗ.

## А ш к ӑ н ч ӑ к

Калав

Кӑрше ял ҫыннипе халӗ кӑна Мускавран хӑнана килнӗ ултӑ ҫулхи Вова, Ален кинеми мнукӗ, ҫӗнӗ вырӑнта малтанхи кунах ашкӑнчӑк ятне илтрӗ. Чӑнах та, пӳрте те кӗмерӗ вӑл, ҫул ҫинчен апат ҫиме те килӗшмерӗ, тӳрех картишӗнче

ухтарма пуçларĕ. Вите алăкĕсене уçа-уçа хупрĕ, нухрепе анса хăпарчĕ, чăхсене шуйхатса салатрĕ, автана хўринчен ярса тытма хăтланчĕ, унтан пĕчĕк чĕпсем патнелле йăпшăнса пыма пуçларĕ.

— Юрамасть вĕсене тивме, — илтĕнчĕ çавăнтах кăмăлсăр сасă.

Вова умне хĕрлĕ çӳçлĕ, куктĕр питлĕ хĕрача пырса тăчĕ. Ку Миля, Вова тăванĕ. Вăл унран пĕр çул аслă, çак çуртра пурăнать. Кăмăла каймасть хĕрачана аякран килнĕ хăна вĕсен килĕнче çапла пуçтахланса çӳрени.

— Юрамасть чĕпсене тытма. Вĕсем пĕчĕк. Хăраççĕ,—терĕ вăл хура çӳçлĕ, хура куçлă хурăнташĕ çине çиллессĕн пăхса.

Вова хирĕç чĕнмерĕ. Чăх хыттăн кăкăлтатма тытăннине илтсе, çавăнтах аслăк еннелле утрĕ.

— Ан пыр çывăха. Ан хărат чăхха. Çăмарта тăвасшăн вăл, — чарчĕ ăна каллех Миля. — Асанне, — терĕ хĕрача, Ален кинеми крыльцара курăнсан. — Мĕн вĕçĕмсĕр ашкăнать вăл? Чаратăп, чаратăп, вăл пур хăлхана та чикмест.

— Эсĕ йĕркелĕ кала, ăнлантар, кăтарт. Вĕсен хулара ун пекки çук.

Çав самантра сарайĕнче сысна çури çухăрса ячĕ.

— Акă каллех! — терĕ те Миля çиллессĕн сасă енне виркĕнчĕ.

Вова пахчана тухрĕ. Кĕçех унтан шыв шавласа юхни илтĕнчĕ. Каярахпа асламăшĕ мнукне вут шаршанĕ çинчен хуса ячĕ.

— И-и, чарусăр, — кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ Ален кинеми.

— Вова, — терĕ вăл, ача çывăрма выртсан, койка хĕрри не ларса. — Ывăнтăм эпĕ паян санпа. Эсĕ мĕншĕн çапла ашкăнатăн?

— Эпĕ-и? — ача куçĕнче тĕлĕнни те, кăштах пăшăрханни те курăнчĕ. — Çук, асанне, эпĕ ашкăнман. Эпĕ аннене чăн-чăн сăмах патăм йĕркеллĕ ача пулатăп тесе.

— Мĕншĕн апла чăх-чĕппе картишĕнче лăпкă çӳреме памастăн? Мĕншĕн сысна çурисене шуйхататăн?

Вова тăруках чĕнмерĕ.

— Эпĕ... эпĕ юратса, — терĕ вăл юлашкинчен. — Манăн вĕсене шутсăр ачашлас килет.

— Пахчара шыв кранне мĕншĕн уçрăн? — каллех ыйтрĕ Ален кинеми. — Ăна та юратса-и? Ну, ма чĕнместĕн?

Ача асламăшĕ çине айăплăн пăхса илчĕ.
— Эсĕ мана вăрçмастăн-и чăннипе каласан?
— Тĕрĕс каланăшăн, паллах, вăрçмастăп.
— Шыв шавласа юхнине курас килчĕ те, — хуллен пĕлтерчĕ Вова.
— Вут шаршанĕ çине мĕншĕн улăхса кайрăн тата? Унтан мĕн курмалли тупрăн?
— Автанла авăтас килчĕ, — терĕ те Вова ассăн сывласа ячĕ.
— Асту, ачам, тек ан хăпар унта, — куллине пытарса асăрхаттарчĕ Ален кинеми. — Шаршанĕ ишĕлсе анма пултарать. Турă сыхлатăр инкек-синкекрен... Юрĕ, калаçрăмăр. Ĕнтĕ çывăр. Ыран, акă, иксĕмĕр чĕпсене тăрантарăпăр, сысна çурисене те çитерĕпĕр.
— Вăт, пыр та калаç вĕсемпе, ачасемпе, — шухăшларĕ Ален кинеми çывăрса каяймасăр. — Эпир вăрçатпăр вĕсене, ӳпкелетпĕр. Унăн вара автан пек авăтас килнĕ... Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен теççĕ çав. Ултă çулхи ача ăс пачĕ мана паян.
Хĕрарăм кĕске вăхăт мнукĕ канлĕн мăшлаттарса сывланине итлесе выртрĕ, унтан ăна пуçĕнчен хуллен ачашласа илчĕ.
— Çывăр, пепкем... Çывăр, ылтăнăм.

## Ултавçă хĕртсурт

Калав

Ĕçрен таврăннă чух мана урамра кӳршĕ чĕнсе илчĕ.
— Элексей пичи, — терĕ вăл килкарти алăкĕнчен тухса. —Мунча кĕрес теместĕн-и? Ăшши çителĕклĕ, шывĕ те пур.
— Аптрамастчĕ тарпа пиçнĕ ӳт-пĕве кантарма, — хавасланса килĕшрĕм эпĕ.
— Вăт-вăт. Килсе çăвăн. Никам та çук халĕ унта. Эпир çемйипех кĕрсе тухрăмăр.
Киле çитсен, эпĕ улăштарса тăхăнма таса кĕпе-йĕм илтĕм те мунчаналла васкарăм. Вăхăт чылях пулнă ĕнтĕ. Хĕвел тахçанах аннă. Анчах çуллахи çĕрсем тĕттĕм мар. Ял та çывăрма выртман-ха. Мунча пăхчара, килти ытти çурт-йĕртен кăшт аяккарах карта хĕрринче ларать. Пĕр енĕпе вăл пралукаллах тухать. Инçе те мар улмуççисем ӳсеççĕ, лапсăркка çырла тĕммисем сарăлса лараççĕ. Салантăм, кĕтĕм вĕри мунчана, спичка илсе мăчăлти краççын лампине çутрăм.

Ҫăвăнтăм, чун каниччен ҫапăнтăм, вара, пăшăхнăскер, уҫăлма пахчана тухрăм. Ҫемҫе курăк ҫине ҫăмăл утиял сартăм та тăсăлса выртрăм йывăҫ тĕмĕ сывăхне. Мĕн тери лайăх, мĕн тери канлĕ! Ҫанталăкĕ тӳлек, сывлама ҫăмăл, уҫă. Ҫӳлте ҫăлтăрсем йăлкăшаҫҫĕ, таҫта аякра йытăсем вĕркелешни илтĕнет, урамра ҫынсем калаҫкалани хăлхана пырса кĕрет. Кунта пралукра шăп. Каҫхи шăрчăк чĕриклетет ҫеҫ. Сасартăк сывăхрах темле ăнланмалла мар сасă илтĕнсе кайрĕ. Мунчара такам... ҫапăнать пек...

— Ҫăтти-ҫатти, ҫат-ҫат-ҫат! Ҫăтти-ҫатти, ҫат-ҫат-ҫат!

Эпĕ пуҫа ялтах ҫĕклерĕм — тимлĕн итлетĕп. Ҫапла, чăннипех такам ҫапăнать... Эпĕ тĕшмĕш сын мар, ҫапах сисмерĕм те, чуна ҫӳҫентерсе, ҫан-ҫурăм сӳлесе кайрĕ. Ачаранах илтсе ӳснĕ тĕрлĕ усал-тĕселсем ҫинчен каласа панисем пуҫа ҫиҫĕм евĕр вирхĕнсе кĕчĕҫ. Хĕртсурт ҫынсем пекех мунчара ҫапăнма юратать тени аса килчĕ...

Ман вырăнта хĕрарăм пулнă пулсан-и — мунчу-качку!— хăранипе ҫине тăхăнмасăр тухса сирпĕнетчĕ ĕнтĕ. Манăн вара ҫав хĕртсурта калама ҫук курас килчĕ. Шиклене-шкиленех шăппăн ура ҫине ҫĕклентĕм, хуллен йăпшăнса, мунча чӳречи патне пытăм та пĕшкĕнсе шалалла пăхрăм... Никам та ҫук. Лавка пушă, милĕксем те эпĕ хунă вырăнтах... Туйăнчĕ ҫеҫ-ши?.. Каллех кайса выртрăм, тăнлатăп — каллех ҫапăнать. Икĕ милĕкĕпех ҫатăлтаттарать, канлĕн ахлатса та, мăшлатса та илет. Тепĕр хут йăпшăнса пытăм — каллех никам та курăнмарĕ. Вăт тĕлĕнтермĕш! Аптранипе мунча йĕри тавра тишкерсе ҫаврăнтăм. Пăрăнса, пралукалла пăхрăм та, акă сана хĕртсурт! — мунча пĕр кĕтессинче сысна хыҫкаланса тăрать...

Ҫапла питĕ ăста улталаса хăварчĕ мана ҫав уҫал-тĕсел. Ҫывхартрĕ те — сухалчĕ. Пурччĕ — халĕ ҫук... Чăннипех шухăшласан, пур-и вăл ҫĕр ҫинче, ҫук-и? Ҫук пулсан мĕншĕн манăҫа тухмасть вăл? Мĕншĕн сĕм авалтанах тĕрлĕ халăх шухăш-кăмăлĕнче пурăнать? Пур пулсан, мĕн вăл? Кам вăл? Хĕртсурт — ау! — ăҫта эсĕ?.. Хирĕҫ чĕнекен ҫук...

# Инçе çул

Çуллахи шăрăхран пытанса, эпĕ хула паркне кĕтĕм. Хĕвел йывăççем çиййĕн çĕкленеймен-ха, çавăнпа кунта сулхăн. Нумаях пулмасть çумăр çуса кайнă. Сывлăш таса, уçă. Унта-кунта пĕчĕк шыв кӳлленчĕкĕсем кăваккăн йăлкăшаççĕ, йĕри-тавра симĕс илем, хитре чечексем. Лĕпĕшсем вĕçеççĕ, кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетет.

Эпĕ ансăр çулпа васкамасăр утатăп. Акă мана хирĕç пĕчĕк çын таплаттарса пырать. Хаваслă куçĕсене умри инçете тĕлленĕ, аллисене малалла тăснă. Çирĕпленсе çитеймен урисем имшер-ха. Вăл сулăна-сулăна каять, чарăнса тăрать. Акă тайăлчĕ, тытăнса тăраймасăр купарчи çине лак ларчĕ. Анчах йĕрсе ямарĕ. Çывăхри тенкел çинчен хăйĕн кашни хусканăвне ытарайми сăнаса ларакае çамрăк арçынпа хĕрарăм çине çаврăнса пăхрĕ çеç. Çĕкленчĕ. Вара каллех малалла ăнтăлчĕ. Вăл ман пата çывхарсан, эпĕ пăрăнса тăтăм.

— Йывăр çулу çăмăл пултăр, пепкем!

2=00